# Эпир хамăр чăвашсемех. Ачамăрсем камсем-ши? • 4 стр.


*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

43(965) №, 2016, ноябрь/чӳк, 3

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


## Саламлатăп

*Хисеплĕ ентешĕмсем!*

Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Чăваш Республики – нумай нациллĕ регион. Истори çапла йĕркеленнĕ: пирĕн тăрăх 128 национальноç представителĕсемшĕн тăван кил пулса тăнă – чĕлхесемпе тата тĕнсемпе çыхăннă нимĕнле уйрăмлăх та Чăваш Енри мирлĕ пурнăçшăн тата тăрăшуллă ĕçшĕн чăрмав пулса тăраймасть. Пире пурне те тăван çĕре, Тăван çĕршыва – Раççей Федерацине – юратни пĕрлештерет.

Республикăра Чăваш Енри халăхсен илемĕпе пуянлăхне кăтартакан тĕнче тата Раççей шайĕнчи мероприятисем ăнăçлă иртеççĕ. Ĕçченлĕх пире экономикăн ансат мар условийĕсенче те ăнăçлă аталанма пулăшать. Ĕçлĕ климат лайăхланать, бизнеса аталантармалли, инноваци проекчĕсене пурнăçламалли меллĕ никĕс йĕркеленĕ. Çуллен çĕнĕ производствăсем уçăлаççĕ, çамрăксем хăйсен пултарулăхĕпе усă курмалли условисем çирĕпленеççĕ: пысăк технологисене тĕпе хуракан хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелетпĕр, ĕç тухăçлăхĕ ӳснине кура ĕç укçин шайĕ те пысăкланать.

Халăхăн социаллă хӳтлĕхĕ, культурăпа кăмăл-сипет йăлисене, çемьен çирĕпленнĕ хаклăхĕсене сыхлас тĕлĕшпе тимлĕх пысăк – вĕсем обществăпа политика тăнăçлăхĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Ача амăшĕпе ачалăх институтне çирĕплетме, ача çуратассине хавхалантарма, халăха паха медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерме, спорт инфратытăмне аталантарма çуллен çĕр-çĕр миллион тенкĕ уйăратпăр. Курăмлă кăтартусенчен пĕри – нумай çул пурăнакансен шучĕ ӳсни: паян 85 çулхи чикĕ урлă Чăваш Енре пурăнакан 17355 çын ярса пуснă, 100 çулхи юбилее 98 çын паллă тунă.

Хаклă опытне çитĕнекен ăрăва панипе кăна мар, çамрăксене хăйсен тĕслĕхĕпе ĕç çыннине хисеплеме, çураçуллă пурăнма, Тăван çĕршыва юратма вĕрентнипе те хисеплĕ ветерансене уйрăммăн тав тăватăп.

Хаклă туссем! Кашни килте килĕшӳпе çураçу пулччăр, тăнăçлăхпа мир вара эсир ыранхи куна шанассине çирĕплетчĕр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**


●Кин тени кил çынни пултăр 2 стр.

●«Сурăм хĕрĕ» – тĕслĕх шайĕнче 3 стр.

●Юн пусăмне йĕркелеме, варикозран сипленме 8 стр.

●Чунтан юратсан нимĕнле инкек те хăрушă мар 9 стр.

●Ăнăçтарас тесен... упăшкана улăштармалла 11 стр.


Елена АТАМАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.




2 стр.


# Юратаççĕ, вулаççĕ

Патăрьел районĕнчи Тĕрĕньелти Марина Положина почтальон ытти мĕнпур чăваш хĕрарăмĕ пекех ирхи шуçăмпах вăранать. Ĕнисене суса кĕтĕве хăваланă тата ытти ĕçе тирпейленĕ хыççăн сумкине йăтса Ыхраçырминчи почта уйрăмне васкать. Вăл çак ĕçре 23 çул тăрăшать. Шăрăх-и е çумăрлă çанталăк-и, çил-тăман алхасать-и – ниме те пăхмасăр 3,5 çухрăмри кӳршĕ яла утать вăл. Хаçат, пенси, çыру валеçнисĕр пуçне ял çыннисен ытти чылай ыйтăвне тивĕçтерет. Пĕрне печени-канфет кирлĕ, теприн супăнь-порошок е чей-кофе пĕтнĕ. Ял лавккине утиччен кил умĕнче кашни кунах чарăнакан почтальонран апат-çимĕç илсе юлма меллĕрех теççĕ тухсах çӳреймен ватăсем. Марина Петровнăна ĕçченлĕхĕпе вăр-варлăхĕшĕн тата ырă кăмăлĕшĕн хисеплени куçкĕрет. Килтен ирех тухса кайса кăнтăрла иртсен, тепĕр чухне каç енне çеç таврăнаканскер кил-тĕрĕшри ĕçсене çеç мар, кĕтӳ кĕтме те, тахăш вăхăтра тăванĕсем патне нимене çитме те ĕлкĕрет вăл. Пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ ку тăрăхра. Йăли çапла, хур-кăвакал пусмалла-и, утă çулса типĕтмелле-и, çĕрулми кăлармалла-и – кирек мĕнле ĕçре те кӳршĕ-аршă пĕрле пухăнать.

| Çанталăк | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 03.11 | – 3 | – 5 |
| 04.11 | + 1 | – 2 |
| 05.11 | – 2 | – 1 |
| 06.11 | – 3 | – 2 |
| 07.11 | + 1 | + 1 |
| 08.11 | – 4 | –10 |
| 09.11 | –11 | –10 |


ÇЫРĂНТАРУ – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн

*декабрь уйăхĕн 26-мĕшĕччен*

"ХЫПАРА" – 572,88 тенкĕпе,

"ХЫПАР-эрнекуна" – 279,36 тенкĕпе,

"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ" хаçата 297,24 тенкĕпе çырăнтараççĕ



МАТТУР!

# Кин тени кил çынни пултăр


● МĂШĂРĔ, ЙĂМĂКĔ, ХУНЯМĂШĔ ТАТА ЛЮДМИЛА ВАСИЛЬЕВНА.

Тăван хуçалăхшăн чунне парса ир те каç фермăра вăй хунăскерĕн килĕнче яланах типтерлĕхпе хăтлăх хуçаланнă. «Хунямăшĕ епле, кинĕ те çапла», – калаçăш пур чăвашсен. Людмила та ĕмĕр тăршшĕпех унăн çулĕпех утнă, асли ăс парса калани çемьере яланах тĕрĕс шутланнă. «Кин тени кил çынни пултăр теççĕ-и-ха? Эпир хунямапа малтанхи кунранах пĕр чĕлхе тупнă. Пĕр-пĕрне ĕмĕр каçармалла мар сивĕ сăмах каласа кӳрентернине астумастăп. Вăл çулхисен ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çăмăл килмен, темĕн те курнă, чăтнă вăрçă ачисем. Тăван аннем те çав шутрах. Хам та аттесĕр ӳстĕннĕ, вăл эпĕ вунă çулта чухне вилнĕ. Çемьере асли пулнă май мĕнпур йывăр ĕç ман çине тиеннĕ. Утă çулма пĕчĕккĕллех хăнăхтарнă. Анне ĕçрен ывăнса таврăннă çĕре вĕри апат пĕçернĕ, йăмăк-шăллăма пăхнă», – каласа кăтартать Людмила Маркова.

Елчĕк районĕнчи Исемпелте пурăнакан Людмила Маркова кашни кунах юнашарти Аслă Пăла Тимеше ĕçе утать. Вăл «Çĕнтерӳ» ОООра 26 çул бухгалтерта тăрăшать. Хăй ĕçне аван пĕлнĕшĕн, яланах вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçланăшăн хуçалăх ертӳçи Николай Головин ырлать ăна.

«Шупашкарти экономикăпа технологи техникумĕнчен вĕренсе тухсан направленипе Тюмень облаçне янăччĕ. Çынсем Çурçĕре ятарласа ĕçлеме каятчĕç, манăн чун çав тери тăван тăрăха туртатчĕ. Унта тăватă çул чăтнă хыççăн каялла Шупашкара таврăнтăм. Камшăн мĕнле пуль те, ют тăрăх – ман валли мар. Турă çырни кĕтнĕ-ши, тĕп хулара пулас мăшăрпа паллашрăм, Елчĕк кинĕ пулса тăтăм», – чунне уçать Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашни ялĕнче çуралнăскер.

Вăл хунямăшĕпе 31 çул пĕрле пурăнать. Качча килсен унран ыррине чылай вĕреннине пытармасть Людмила Васильевна. Анатрисен йăли-йĕркине, ку енчи чăвашсем тĕрлĕ пахчаçимĕç акни-лартнине, малтанхи кунранах хăнăхнă вăл. Тул çутăличченех тăрса темĕн те тума ĕлкĕрекен хунямăшĕ уншăн яланах тĕслĕх вырăнĕнче пулнă. Çапах та ултă ача пăхса çитĕнтернĕ Минадора Пантелеймоновна хăй ывăнни пирки нихăçан та каласа курман.

Людмилăпа Валерий Марковсем виçĕ ача пăхса çитĕнтернĕ. Кукамай-кукаçи ята та илтме ĕлкĕрнĕ вĕсем.

«Кирек мĕн тесен те килте çын пурри лайăх. Ăçта та пулин кайсан та чунра лăпкă. Ĕмĕр аллинчен ĕç яман хуняма 84 çулта та пĕр вырăнта ларма пĕлмест, вăйĕ çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Пахчара кăштăртатма юратать, çулĕсене кура мар вăл, хăяр-помидор калчине те хăех çитĕнтерет, пахчара пĕр çумкурăк тăратмасть. Тăван анне вырăннех вăл маншăн. Ачасене те хунямах пăхса çитĕнтерчĕ», – иккĕмĕш амăшне хăйĕн сывăх çыннипе танлаштарса каласрĕ Людмила Васильевна.

**Елена АТАМАНОВА.**

ÇЫРĂНТАРУ

# Юратаççĕ, вулаççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Тулăх пурнăçпа киленеççĕ Тĕрĕньелсем. Положинсен витинче тăватă ĕне, тăватă пăру. Сыснасемпе сурăхсем, кроликсем, картиш тулли хур-кăвакал, чăх-чĕп ĕрчетеççĕ. Çураçулăхпа килĕшӳ хуçаланать ку килте. Хĕрарăм-арçын ĕçне тиркемен мăшăрĕ пушă вăхăт тупăнсанах арăмне пулăшма васкать. Николай Александрович чылайранпа пушар хуралĕнче водительте тăрăшать. Хĕрĕпе ывăлĕ те пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă.

Марина Петровна тăрăшнипе «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата юратса вулаççĕ ку тăрăхра. Пĕр сиктерми темиçе çул çырăнса илекен çемье те чылай. Икĕ çул каялла çак пысăках мар ялта пирĕн кăларăмпа 40 ытла çын туслашнăччĕ. «Чăваш хĕрарăмне» алăран ямасăр вулакан халĕ те сахал мар.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПУРНĂÇ УРОКĔСЕМ

## Фирс пичче катаччийĕ

Фирс пичче икĕ урапаллă мотоциклĕпе вĕт-шакăра катаччи чуптарма юрататчĕ. Ăçтан тупнă-ши çунтармалли-сĕрмеллине?

Хĕлле пирĕн çунашкасенчен «караван» туса ярăнтарса савăнтаратчĕ. Çуна пуçне кĕске хунар çакса тĕттĕмленсен те Ускасси, Çăмахуй таранах çитсе çавăрнаттăмăр.

## Кавăн, çарăк...

Пахчаçимĕçе кăмакара чукунпах пĕçерсе лартса паратчĕ пире Минеми – Генук, Валери, Витюк кукамăшĕ, упăшкине граждан вăрçинче çухатнă кинемей.

Якку Кули, Леви, Лиссаппа Тули – пĕрле выляса ӳснĕскерсем, пĕрле пĕр тимĕр кравать çинче те çĕр каçнăскерсем çав апата çисех, тен, çĕршывшăн усăллă çынсем пулчĕç.

Гена Виссарионов «Чăвашкабель» заводра вăй хурса 3 ордена тивĕçрĕ. Унăн шăллĕ Валерий Чернобыль инкекне сирме хутшăнчĕ. Валерий Скворцов автобуспа çĕр-çĕр çынна турттарчĕ. Маларах çар полигонĕнче сăнавçă шутланнă. Шăллĕ Лева совхозри машинăпа груз турттарнă.

Вăт çавăн пек вĕсем – кавăн, кишĕр, çарăк çисе ӳснисем!

## Рулеткăпах виçнĕ

Çут çырминчен çӳлелле йĕлтĕр йĕрĕ карнăччĕ: Тустирик, Ваткисурт еннелле. Икĕ Микула: Меркурьевпа Илларионов йĕлтĕрçĕсем – çине тăрса, рулеткăпа виçе-виçе дистанцие пахаласа çул хывнă. Пĕри чăнкă çырмасене килĕштернĕ, тепри тусĕсене хĕрхеннĕ. Паян туссем, манран 4-5 çул кĕçĕнрехскерсем, Николай Илларионов – Çĕпĕрте, Коля Меркурьев арăмĕпе Галинăпа хулари хваттерне ачисене хăварса тăван Пукашра чаплă çурт çĕкленĕ.

## Тĕрлеме те вĕреннĕ

Пĕчĕк хутаçа чикнĕ кукăль сăмсине пысăк тăхтавра парта хушшинче вăтанавăтана çыртса çинĕ эпир – вăрçă хыççăн çуралнисем. Хутаçне Çĕньял шкулĕнчи ĕç урокĕсенче вĕрентекенсем сăнаса тăрса хамăрах çĕлеттернĕ пире: Лидия Егоровна, Иульяна Ефимовна...

Вĕри кукăльне вара аннесем питĕ тирпейлĕн çав хутаçа, унтан пир сумкăна чиксе парса янă:

– Ан тĕпретнĕ пултăр çĕре, тăхтавччен ан çинĕ пултăр! – тетчĕç хытарса.

Умри учитель те кукăль, те пӳремеч, те çăкăр чĕлли çавăн йышши пĕчĕк хутаçранах кăларса çырта-çырта чейпе сыпнă...

Килтен парса янă пир татăкĕсенчен сăмса тутри туса тĕрлĕ тĕслĕ çиппемпе тĕрлеме те вĕрентнĕ пире. Çакă çулсем иртсен çарта гимнастерка çухи çине шурă татăк çĕлеме питĕ пулăшнă вара. Асăраххисем сăмса тутри тĕрлеме килĕшместчĕç.

– Эпир хĕрача-и вара? Мĕне кирлĕ тĕрĕ тĕрлесси пире? – тесе те мăкăртататчĕç сăмса айĕн.

**ПУКАШ Тули.**

ШĂПА

# «Анне вĕренме ямарĕ»

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси ялĕнче кашни кĕçнерникун пасар пуçтарăнать. Халăх тем туянма та пултарать çав кун: хуркăвакалне те, хуçалăх таварĕсене те, ĕçмелли-çимеллине те. Чылайăшĕ вара пасара çынна курса калаçма пырать. Зоя Васильевăпа шăпах пасарта тĕл пултри Пасар çывăхне окоп чавма кайнă эпир. Шăн тăпрана çĕнтерейместĕмĕр, ыттисем катнисене çӳлелле перетттĕмĕр. Тумтир çĕтĕкчĕ, питĕ шăнаттăмăр.

Атте вăрçăран аманса таврăнсан нумаях пурăнаймарĕ. Эпир, 8 ача, аннепе ӳснĕ. Кашниех пурнăçра хăйĕн вырăнне тухакан Хаснар шывĕ хушшинче икĕ шыв арманĕ пурччĕ. Пĕринче Уй Пилемĕч çынни ĕçлетчĕ. Вăл пире хĕрхенсе хушăран апат пĕçерсе çитеретчĕ. Тепĕр арманта Васлекасси арçынни тимлетчĕ. Вăл вара питĕ хытăскерччĕ. Унпа пĕрле хамăр ялти Ваççили пурччĕ, вăл çеç вăрттăн пуçличчен малтан хăмла пахчи бригадирĕ те пулнă-ха, ытти ĕçе те пурнăçланă, пĕринчен те пăрăнман. Кайран та килте ахаль ларман: Сĕнтĕрвăрринче вылăх самăртакан çĕртре 5 çул, кирпĕч заводĕнче 3 çул ĕçлерĕм. Утмăл çултан иртнĕ пулин те Атăл тăрăх анаталла /Сарă ту, Самар са сăмах пуçартăмăр та.

Зосима /хут çинче ăна çапла çырнă/ Васильева 1927 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ильменкасси ялĕнче çуралнă.

– Ачалăх ытти çемьери пекех çăмăл пулман. Мĕн пĕчĕкрен колхозра ĕçленĕ. Хуракасси шкулĕнче 7-мĕш класс вĕреннĕ хыççăн Çĕрпӳри учительсем хатĕрлекен училищĕне каяс килетчĕ манăн. Анчах анне ямарĕ, ĕçлемелле терĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çамрăклах Куславкка районĕнчи Энтупнă. Асли Миша Шупашкарта строитель пулнă. Юля Хусанта медсестрара тăрăшнă. Гальăпа эпĕ колхозра ĕçленĕ. Чи кĕçĕнни Лиза агронома вĕреннĕ, халĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнче пурăнать.

Вăрçă хыççăн пире, çамрăксене, вăрман касма ячĕç. Хаснар патĕнче 8 çул ĕçлерĕм, пушăт касса хамах çăпата тума вĕрентĕм. Кунĕпе çӳресе ура йĕпенетчĕ. Вут хурса типĕтсе те тăхнаттăмăр çăпатасене. Ун чухне апачĕ те начарччĕ. Атăла юхса хăналатчĕ.

Вăрманта ĕçлесе пĕтерсен пĕр хушă Хуракассинчи хăйма уйăракан пунктра тăрăшрăм. Халăхран сĕт пуçтараттăмăр. Ун чухне патшалăха 200 литр сĕт е 8 килограмм шăратнă çу памаллаччĕ. Сĕтрен çу та, казеин та тăваттăмăр.

1958 çулта Хуракасси ачине качча тухрăм. «Социализм» колхозра, «Эльбарусовский» совхозра доярккăра 18 çул ĕçлерĕм. Тивĕçлĕ канăва тухсан та 4 çул ĕне сурăм. Фермăра вăй хума облаçĕсене/ темиçе хут та кайса тырă ĕçлесе илсе килнĕ.

1959 çулта çуралнă Ирăна пĕчченех ӳстерме тиврĕ, упăшка çамрăклах вилчĕ. Хĕрĕм вăтам шкул хыççăн повара вĕренчĕ, Сĕнтĕрвăрринче ĕçлерĕ. Хушма пĕлӳ илсен районта паспорт параканра 18 çул тăрăшрĕ. Çемье çавăрса виçĕ ача çуратса ӳстерчĕ. Мăнуксемпе эпĕ те сахал мар йăпантăм. Пĕри хĕсметре Чечняра пулчĕ. Киле таврăнсан вилни ашшĕ-амăшĕшĕн те, маншăн та пысăк хуйăх пулчĕ. Наташăпа Марина та çемьеллĕ, ачисене ӳстернĕ, кил-çурт çавăрнă. Кĕçĕн мăнук Дима кăçал аттестат илнĕ хыççăн Ивановăри çар академине вĕренме кĕчĕ.

Пурнăç çулĕ такăрах пулмарĕ. Апла пулин те Хуракассинчи хамăн килте паянхи кунччченех пурăнатăп-ха. Мăнуксене те май килнĕ таран пулăшма тăрăшатăп, вĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатăп.

90 çула кайрăм пулин те килти ĕçсене хамах тирпейлетĕп, пахчаçимĕç те ӳстеретĕп. Анне мана ултă çулта чухнех чиркĕве илсе кайнăччĕ. Халĕ унта часчасах çӳретĕп, ăша пусарма кĕлĕ вулатăп. Ман тавра лайăх çынсем сахал мар, вĕсемпе калаçса, кирлĕ ыйтусене сӳтсе явса малаллах талпăнатăп.

**Маргарита МИХАЙЛОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

# Патăрьелсем ĕçлеме пултарнине çирĕплетрĕç



**Республика пуçлăхĕ Михаил Игнатьев юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче Патăрьел районĕнче ĕçлĕ çулçӳревре пулчĕ, районсен муниципалитечĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе канашлу ирттерчĕ.**

Çав кун ялпа районшăн çеç мар, республикăшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ объект – аш-какай тирпейлекен цех – хута кайрĕ.

«Патăрьел çĕрĕ пуçаруллă та хастар çынсемпе пуян. Вĕсем бизнеса ăнăçлă аталантарма пĕлеççĕ, ĕç вырăнĕсем тăваççĕ, ял халăхĕн пурнăçне çĕнĕ шая çĕклеççĕ. Ун пек ĕçченсем патне килме те, вĕсемпе калаçма та кăмăллă», – палăртрĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Республика Пуçлăхĕ Анат Туça ялĕнче Валерий Кузнецов фермерăн пахчаçимĕç управне уçма хутшăнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Рудольф Селиванов каланă тăрăх – Раççейри севокăн 30 процентне Патăрьелсем çитĕнтереççĕ, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне ăсатаççĕ. Районта кăçал кăна пахчаçимĕçĕн 6 управне тунă. Апла пулсан ял хуçалăх продукцине тата ытларах çитĕнтерсе тупăш илме май пур.

Канашлу Патăрьелĕнчи бизнес-инкубаторта иртрĕ. Республика Пуçлăхĕ вырăнти влаç хăйĕн тивĕçĕсене пур çĕрте те кирлĕ пек пурнăçламаннине палăртрĕ.

«2016 çула эпир лайăх кăтартусемпе вĕçлетпĕр, анчах та ку лăпланса лармаллине пĕлтермест, çитес çул республика экономикине мĕнле аталантарасси çинчен халех шухăшламалла. Кăçал мĕнпур район-хулана республика бюджетĕнчен пулăшу панă, килес çул та парăпăр», – терĕ Михаил Васильевич.

Хула-район экономикине инвестицисем хывас, налуксем пуçтарас ыйтупа Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторинпа финанс министрĕ Светлана Енилина тĕплĕ каларĕç.

**Хамăр инф.**

# Проектсемшĕн çул уçă

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер РФ Правительстви çумĕнчи Анализ центрĕнче «Патшалăх секторĕнче проект управленийĕпе усă курнин практики» конференцие хутшăннă.**

Общество бюджет укçи çителĕксĕр тата тулашри политика кăткăс чухнехи условисенче социаллă тĕллевсене уçăмлă палăртма хистет. Пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçлама пĕтĕмпе 200 миллиард тенкĕ патнелле уйăраççĕ.

Перекет банкĕн проект офисĕн директорĕ Алина Гроссман банкăн проект управленийĕпе çыхăннă ĕçĕпе паллаштарнă. Унпа калаçнă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Перекет банкĕ тĕлĕшпе предпринимательсен енчен кăмăлсăрлăх пурри çинчен каланă – бизнеса аталантармашкăн кредитсем илеймеççĕ.

Палăртни вырăнлă: регионсенче проект управленине çул парассине РФ Президенчĕ Владимир Путин пĕлтĕр Петербургри экономика форумĕнче пуçарнă. Чăваш Ене илес тĕк – республикăра проектсен управленийĕн йĕркелӳ штабне туса хунă, вăл чи лайăх практикăсене ĕçе кĕртес енĕпе ĕçлет. ЧР Пуçлăхĕн указĕпе Стратеги аталанăвĕ тата пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсем енĕпе ĕçлекен канаш йĕркеленĕ. Проект управленийĕ муниципалитетсен шайĕнче те вăй илет.

* * *

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче ĕçлĕ визитпа Коми республикинче пулнă. Михаил Игнатьевăн тата Коми пуçлăхĕн Сергей Гапликовăн ĕçлĕ тĕлпулăвĕнче икĕ республика килĕштерсе ĕçлессине аталантарассине пăхса тухнă.

**Хамăр инф.**

# Туслăх çирĕпленет

**Иртнĕ эрнере Наци библиотекинче регионсен хушшинчи «Культура урлă – халăхсен килĕшĕвĕ патне» форум ĕçленĕ.**

Республикăн тĕп хулине Тутарстанран, Пушкăртстанран, Мари Элтан, Мордовирен, Карелирен, Белгородран, Питĕртен, Екатеринбургран, Ивановăран, Костромаран, Мускавран, Эрĕнпуртан, Пензăран, Рязаньрен, Чĕмпĕртен, Кăркăсстанпа Молдовăран 200 яхăн хăна килсе çитнĕ.

Юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче форума савăнăçлă лару-тăрура уçнă май ЧР культура министрĕ Константин Яковлев республикăри тĕрлĕ халăх çынни яланах пĕр-пĕрне пулăшма хатĕррине палăртнă.

ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн Ертӳçи Надежда Прокопьева ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн Валерий Филимоновăн саламне вуласа панă. Унта Чăваш Ен 128 нацишĕн тăван кил пулса тăни, вĕсем пĕр çемьери пек чăмăртанса хăйсен çирĕплĕхне кăтартни, çак туслăха нимĕнле вăй та çĕнтерейменни çинчен каланă.

Форума хутшăнакансем «çавра сĕтел» хушшинче тĕрлĕ ыйту тавра калаçнă. Сăмахран, Пушкăртстан, Мари Эл, Мордови, Чăваш Ен художникĕсем, дизайнерĕсем, алăстисем Атăлçи халăхĕн наци костюмĕн хăйнеевĕрлĕхне тишкернĕ. Малашне пĕрле ĕçлесе уйрăм ăстасемпе предприятисене пулăшса пыма, вĕренӳ пособийĕсем хатĕрлеме, Атăлçи культурине фестивальсемпе куравсенче кăтартма палăртнă.

Паллă çыравçăсемпе куçаруçăсем, литература критикĕсемпе тĕпчевçĕсем наци чĕлхипе çырнă ĕçсене куçарассипе çыхăннă ыйтусене хускатнă. Хусанти Марк Зарецкий ячĕллĕ литература пĕрлешĕвĕн ертӳçи Алия Каримова Раççейри халăхсен хальхи поэзин антологине хатĕрлесе çитерни çинчен каланă. Унта Геннадий Айхин, Николай Исмуковăн, Петĕр Яккусен, Марина Карягинăн, Любовь Мартьяновăн ĕçĕсене вырăсла куçарса кĕртнĕ.

Пушкăртстанри Марсель Салимов пушкăртла тата чăвашла çыракансен туслăхĕ вăйланса пынине тĕслĕхсемпе çирĕплетнĕ. Геннадий Айхин куçару хăйнеевĕрлĕхĕ çинчен Ева Лисинăпа Атнер Хусанкай каласа кăтартнă.

Юпа уйăхĕн 28-мĕшĕнчи Наци поэзийĕн фестивалĕнче Виктор Куллэ /Мускав/, Алия Каримова /Хусан/, Лилия Сагидуллина тата Марсель Салимов /Ĕпхӳ/, Татьяна Мокшанова /Саранск/, Юрий Сементер, Раиса Сарпи, Светлана Асамат /Чăваш Ен/ тата ыттисем темиçе чĕлхепе сăвă вуланă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

# «Сурăм хĕрĕ» – ыттисемшĕн тĕслĕх

**Юпа уйăхĕн 29-мĕшĕнче Пĕтĕм чăвашсен «Асам» II кинофестивальне пĕтĕмлетрĕç.**

ЧР культура министрĕн çумĕ Вячеслав Оринов кинофестивале хутшăнакансене пурне те тав турĕ, ăнăçу сунчĕ.

Кĕтнĕ пекех, Владимир Карсаковăн “Сурăм хĕрĕ” илемлĕ фильмĕ Гран-прие тивĕçрĕ. Жюри членĕсем калашле, пирĕн çак шая тытса пымалла. Алексей Иванов-Сĕрмеке тата “Чăваш Ен” ПТРК операторне Сергей Мышева /вилнĕ хыççăн/ чăваш киноискусствин аталанăвне тӳпе хывнăшăн ятарлă парнепе чысларĕç.

Елена Рябцевăн “Принять удар” ĕçĕ “Чи лайăх илемлĕ фильм” номинацире çĕнтерчĕ. Вăл – чирлĕ ашшĕпе ывăлĕ çинчен. Çак фильмри Анатолий Трофимов – чи лайăх оператор. Елена Рябцева – монтаж енĕпе чи лайăх режиссер.

«История великого народа» /режиссерĕ Юрий Сергеев/ ĕç – чи лайăх документ фильмĕ. Марина Карягинăн Терентий Дверенин çинчен каласа кăтартакан «Çĕр çул иртсен» ĕçĕ «Кĕске метражлă чи лайăх фильм» номинацире мала тухрĕ.

Улатăрти ачасен ӳнер шкулĕнчи мультипликаци студийĕн ĕçĕсене жюри членĕсем пысăк хак пачĕç. «Как ловили луну» /Ольга Горюнова/ «Чи лайăх анимаци фильмĕ» ят çĕнсе илчĕ.

«Сурăм хĕрĕ» илемлĕ фильмри тĕп сăнар Ирина Верьялова «Хĕрарăм рольне чи лайăх вылякан» номинацире çĕнтерчĕ. «В лесу» ĕçре кăмпа шыракан Сергей Данилова арçын рольне чи лайăх калăпланăшăн чысларĕç.

Иккĕмĕш планри арçын рольне чи лайăх вылянăшăн «Ветки» илемлĕ фильмри Алексей Короткова сцена çине чĕнчĕç. Çавнашкалах иккĕмĕш планри хĕрарăм сăнарне витĕмлĕ уçса панăшăн «Там, где тебя нет» илемлĕ фильмри Наталья Козлова палăрчĕ.

Эпизодри хĕрарăм рольне чи лайăх калăпланăшăн «Сурăм хĕрĕ» илемлĕ фильмри Надежда Кирилловăна, эпизодри арçын сăнарне чи лайăх вылянăшăн «Там, где тебя нет» ĕçри Юрий Спиридонова дипломпа статуэтка пачĕç.

«Чи лайăх сценари» номинацире Юрий Михеева /«История великого народа»/ çитекен пулмарĕ. «В лесу» илемлĕ фильма кĕвĕпе илемлетнĕ Илья Чесноков – чи лайăх композитор. Чăнах, хăш-пĕр вырăнта çан-çурăм тăрăх сивĕ чупрĕ. «Зри в корень» документ фильмĕнчи Владимир Беляков сасă режиссерĕн ĕçне палăртса хăварчĕç. «Никита» ĕçри Татьяна Шаповалова «Илемлĕх енĕпе чи лайăх постановка» номинацире палăрчĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

## СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Каникул иртсен те тĕлпулу манăçмĕ

Марина ТУМАЛАНОВА

**«Кĕркуннехи каникул вăхăтĕнче ачасене Тутарстанри планетарие илсе каймалла. Унта кинофильм кăтартĕç, экскурси йĕркелĕç», – ăшталанать Шупашкарти 56-мĕш шкулти кĕçĕн класра вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕ. Сăмах май, хамăр та ача чухне Мускав таранччен çитнĕ, паллă вырăнсемпе паллашнă.**

**Çула тухмашкăн хăвăртах автобус тупрĕç. Кашниех кутамккана апат-çимĕç чикрĕ – каппла кафе-столовăй шырамалла мар. Кӳршĕ республикăна пĕр кунрах кайса килчĕç вĕсем. Ачасем çӳлçӳревпе питĕ кăмăллă. Çакнашкал экскурси шкул программине çăмăллăнах ăша хывма пулăшĕ. «Тăван тавралăх» урокра планетăсемпе спутниксем çинчен каласа кăтартнă вĕсене. Çавăнпах йăлтах кăсăклă пулнă кĕçĕн класра пĕлӳ илекенсемшĕн.**

**Çĕрпӳри 2-мĕш вăтам шкулти 10-мĕш класс вĕренекенĕсем те Тутарстана çул тытнă. Çамрăксем Хусан историйĕпе, халăх йăли-йĕркипе, архитектура палăкĕсемпе кăсăкланнă.**

**Вăрмар вăтам шкулĕнче 2-мĕш класра вĕренекенсем те каникулта Тутарстанри истори музейĕнче пулнă. Ачасем «Паллах, наука!» ярăмри шоу программăна хутшăннă. Вĕсене хими тата физика эксперименчĕсемпе тĕлĕнтерсе тыткăнланă. Çакăнтах Çĕр планета историне каласа кăтартнă. Çул çӳрени, паллах, вĕсен тавракурăмне аталантарать.**

**Шупашкарти ача-пăча пултарулăх çурчĕ республикăн тĕп хулинчи Чăваш наци музейне, Ӳнер галерейине, Василий Чапаев музейне, Трактор историйĕн музейне кайса курмашкăн вĕренекенсене ушкăнсене пуçтарать. Унсăр пуçне вĕсен Козьмодемьянскри, Шуршăлти музей экспоначĕсемпе паллашма май пур. Ку ĕç республика гранчĕ пулăшнипе пурнăçланса пырать.**

**Чăваш Енри хушма пĕлӳ паракан учреждениcенче, спорт комплексĕсенче, культура керменĕсенче викторинăсем, конкурссем, ăмăртусем ирттернине палăртмалла. Апла тăк кĕркуннехи каникула кашниех усăллă ирттерме пултарать.**

**Элĕкри физкультурăпа спорт комплексĕ çумĕнчи «Хĕлхем» шкулта, тĕслĕхрен, ГТО нормине тултарас тĕллевлисен фестивальне йĕркеленĕ. Çакăнта 302 вĕренекен хăйĕн вăйне тĕрĕслесе пăхнă.**

**Шупашкарти ача-пăча пултарулăх керменĕн педагогĕ Надежда Степанова «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕнче ачасем валли ăсталăх класĕ йĕркеленĕ. Хурăн хуппинчен тĕрлĕ хатĕр тума вĕрентнĕ вăл. Çакăнтах кружокра хăйсен ăсталăхне туптакан ачасен ĕçĕсемпе паллаштарнă. Чăваш юмахĕсемпе халапĕсен сăнарĕсем уйрăмах килĕшӳллĕ пулса тухнă.**

**Ольга Антипова хăйĕн ĕçĕсене илсе пынă. Кружокра ăсталанă япалисем пултарулăх конкурсĕсенче çĕнтернĕ. Вăл ачасен ыйтăвĕсене хаваспах хуравланă. Çакнашкал тĕлпулу хыççăн хурăн хуппипе ĕçлекенсен йышĕ пысăкланасса шанас килет. Тен, камăн та пулсан хушма укçа ĕçлесе илес килĕ? Хурăн хуппинчен тунă япала кĕсьене хулăнлатма май парĕ.**

**Пăрачкаври Николай Мишутин ячĕллĕ ача-пăча библиотекин специалисчĕсем 7-мĕш класс вĕренекенĕсемпе тĕлпулăва полици ĕçченĕсене чĕннĕ. Çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен инспектор Антонина Глухова йĕрке хуралçин профессийĕ çинчен каласа кăтартнă, йăнăш утăм тăвасран асăрханма ыйтнă. Çамрăкла саккун пăсни пурнăç тăршшĕпех ура хурса пынин тĕслĕхĕсене илсе кăтартнă вăл. Юлашкинчен полици ĕçченĕ ачасене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, ытларах вулама, ашшĕ-амăшне итлеме чĕнсе каланă.**

**Кĕркуннехи каникул хăвăртах иртсе кайĕ. Тĕлпулу, экскурси саманчĕсем вара чылайлăха асра юлĕç, шкулта лайăхрах вĕренме пулăшĕç.**

АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ



# Хĕрсем те паттăрлăхпа палăрнă

Çамрăк хĕр 1942 çулта хăйĕн ирĕкĕпе салтак атти тăхăннă. Тăван çĕршыва хӳтĕлесси кашнин тивĕçĕ пулнине ăнланнă.

– Мускава, сывлăш çарне лекрĕм эпĕ. Çĕнтерӳччĕнех тĕп хулана сыхларăмăр. Манăн тăшман самолечĕсемпе бомбардировщикĕсене приборсемпе усă курса тытмаллаччĕ. Мĕнле хăвăртлăхпа, хăш енчен килнине палăртмаллаччĕ. Тимĕр кайăка сасăранах уйăрма хăнăхса çитнĕччĕ. Эпĕ тăшманпа куçакуçăн тĕл пулман. Пурпĕр хăрушăччĕ. Самолет кĕрлесе килнине хăнăхиччен – пушшех. Бомпа пăрахма та пултарассĕ-çке... Юрать, зенит артиллерийĕ тĕп хуламăра йĕри-тавралла сыхланă. Çĕрпӳртре пурăнаттăмăр. Самолет сассине илтсенех: «Тревога!» кăшкăратчĕç, – каласа кăтартать Патăрьел районĕнчи Кĕçĕн Патăрьелте пурăнакан вăрçă ветеранĕ Вера Тихонова.

Вера Николаевна çемьере тăватă ачаран асли пулнă. 1942 çулта кăрлач уйăхĕнче ашшĕне вăрçа ăсатнă вĕсем. Ака уйăхĕнче кил хуçи йывăр аманса таврăннă. Виçĕ ывăлĕ вăрçа кайман пулин те тăван çĕршыв умĕнчи парăмне туллин татнă – хĕсметре пулнă. Ывăлĕсем çеç мар, хĕрĕ те салтак ятне илтнĕ-çке.

Выçăллă-тутăллă ачалăх. 10 класс хыççăн вĕренме каяс ĕмĕтне пурнăçлайман Вера Николаевна. Ĕçе кӳлĕнме тивнĕ. 1942 çулхи раштав уйăхĕнче вара шăллĕсемпе ашшĕ-амăшĕ ăна фронта ăсатнă.

– Çĕнтерĕве саламласа «Ура!» кăшкăрнă хыççăн демобилизаците кĕтме тытăнтăмăр. Тăван тăрăха таврăнас килет-çке. 1945 çулхи утă уйăхĕн 22-мĕшĕнче киле каймa ирĕк пачĕç.

Тăван яла таврăнма, паллах, хавас. Эпĕ атте тĕп килĕнче çуралнă, вăл Аслă урамраччĕ. Яла та унтанах кĕмеллеччĕ. Аттен шăллĕн ачисем урамра вылятчĕç. Асанне пурăнатчĕ, эпĕ таврăнасса питĕ кĕтнĕ вăл. Икĕ сыпăкри Санька шăллăм: «Вера аппа килет!» – тесе пĕрремĕш кăшкăрчĕ. Ара, салтак тумĕллĕ хĕр ял хапхинчен кĕрсенех курăнать ĕнтĕ. Санька эпĕ çитиччен ырă хыпара асаннене кĕрсе те каланă. Вăл, паллах, питĕ савăнчĕ. Ăна курсан тăван киле уттартăм... – иртнине куçĕ умне кăларать Вера аппа.

Районтан вăрçа пĕр вăхăтра пиллĕкĕн кайнă вĕсем, пурте пĕр таврана лекнĕ. Тăван тăрăха та пĕрлех таврăннă. Паян пилĕк салтак-хĕртен Вера Николаевна пĕччен пурăнать.

– Шăллăмсем тракторпа ĕçлетчĕç. Кĕçĕнни ун чухне пĕчĕкрехчĕ-ха. Вăрçăран таврăнсан эпĕ те колхозра ĕçleme пуçларăм. Ĕмĕрĕпе бригадăра тăрăшрăм. Пенси çулне çитсен те ĕçе пайтах утнă, – пĕлтерет ĕç ветеранĕ.

Икĕ шăллĕ каярах Шупашкарта тĕпленнĕ. Тепри уйрăлса тухса пĕр кил урлă пурăннă. Шел, паян пĕртăванĕсем те çук ĕнтĕ. Вера тĕп килĕнче юлаканни пулнă, ашшĕ-амăшне пăхса пурăннă. Çемье çавăрма пӳрмен ăна. Апла пулин те 1949 çулта вăл хĕрне Ираидăна кун çути парнеленĕ. Халĕ унпа пурăнаççĕ те. Шел, кĕрӳшĕ пурнăçран ытла та ир уйрăлнă.

Вера Николаевнăн икĕ мăнук. Наташа шкулта тăрăшать. Патăрьелĕнче тĕпленнĕ. Эдик ялта пурăнать, çемйипе амăшĕпе асламăшĕнчен нумаях пулмасть çеç уйрăлса тухнă. Ветеран тăватă кĕçĕн мăнукĕпе куç тулли савăнать. Вĕсем пурте – ывăлсем, пулас салтаксем.

Вера Николаевнăн çурт лартма та тивнĕ. Ашшĕ-амăшĕн йывăç пӳртне кĕрӳ кĕртсен çĕнетнĕ, çирĕплетнĕ. Шел, халĕ кунта икĕ хĕрарăм çеç хуçаланать.

Çĕнтерӳ 20 çул тултарнă ятпа ветерана «Паттăрлăхшăн» медальпе чысланă. Ку уншăн – чи сумлă парне. Ахаль мар ун пирки каласа кăтартнă чухне кинемейĕн куçĕ те шывланать.

– Ачапча пулнă. Нимĕн те ăнланман. Медальсен хакне пĕлмен. Çакса яраттăмăр та выляттăмăр. Чылайăшне çухатнă та пуль, – ача чухнехине аса илсе ӳкĕнет те хĕрĕ Ирина. Халĕ пулсан-и?

90 çултан иртнĕ ветеран хаçат-журналпа та туслă.

– Хаçат вуламасан тата мĕн тăвас, вăхăта епле иртерес? Унчен ĕне те, сысна та усраттăмăр. Халĕ какай валли – хуркаквакал, сĕт валли икĕ качака пур, – теççĕ хĕрарăмсем.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

АХРĂМ

# Тăван чĕлхене йытта персе памĕç-ши?

Юлашки вăхăтра чăваш чĕлхи шăпишĕн пăшăрханакан статьясем сахал мар пичетленчĕç. Вĕсенчен пĕри – Виталий Енĕшĕн «Сисĕнмеллех чакрăмăр» статйи /«Чăваш хĕрарăмĕ», 37 №/. Автор чунтанах пăшăрханни палăрать. Тăван чĕлхепе калаçакансен шучĕ çултан-çул чакать. Хулара пурăнакан чăвашсем кăна мар, ялта та нумайăшĕ ачисене тăван чĕлхерен пистерсе паян вырăсла калаçтарать. Халăх тăван чĕлхене пăсса ни вырăсла, ни чăвашла калаçма тытăнчĕ. Кунта шкулсен айăпĕ те сахал мар тесшĕн эпĕ. Пур урока та вырăсла иртереççĕ. Чăваш чĕлхи уйрăм предмет пулса юлчĕ пулсан та тăван пуплев хăйĕн пӳлĕмĕнчен тухаймасть. Педканашлусем те, вĕрентекенсем пурте чăваш пулсан та, вырăсла иртеççĕ. Сехет шучĕсене те хĕстерсех пыраççĕ. Ача чăвашла тĕрĕс калаçма ăçтан хăнăхтăр-ха? Манăн шухăшпа, историпе географие те чăвашла вĕрентмелле. Сăмахлăха хамăрах ытла та мĕскĕнлетсе пыратпăр мар-и?

Тутар шкулĕсенче акă ачасем пур предмета та тăван чĕлхепех вĕренеççĕ. Хăйсен пуянлăхĕшĕн çирĕп тăраççĕ вĕсем. Шупашкара пырсан ăçта кĕрсен те «говорите по-русски» тенине илтетĕп. Аксура унчен чăваш педучилищи пурччĕ. Аксусемех вăтам шкулта чăвашла вĕренетчĕç. Халĕ вара кунта ӳсекен ăру тăван чĕлхепе калаçнине илтейместĕн.

Мана час-часах çакă аса килет: иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче Хусанта пединститутра куçăмсăр майпа вĕрентĕм. Тутарсемпе пĕрле экзамен тытма тӳр килчĕ. Ыйтусене тăван чĕлхепе хуравларĕç вĕсем. Черет ман пата çитрĕ. Эпĕ чăваш иккенне пĕлсен преподаватель билет хуравĕ вырăнне чăвашсене çутта кăларнă Иван Яковлев çинчен мĕн пĕлнине каласа пама хушрĕ. Ун чухне эпĕ вăл Чĕмпĕрте чăваш шкулне уçнисĕр пуçне нимех те калаймарăм. Вĕрентекен мана çапла ăс пачĕ: «Билетри ыйтусен хуравне, тен, «пиллĕклĕх» те пĕлетĕр пулĕ, анчах Яковлев çинчен – начар. Çавăнпах «виççĕрен» ытла лартаймастăп. Хăвăрăн чĕлхе, культура патриочĕ пулмалли сирĕн», – терĕ. Вăл каланине халĕ те манмастăп.

Эпир хамăр ачасене тăван чĕлхерен мĕншĕн пистеретпĕрши? Çавăншăн чун тарăхать. Атте-анне чĕлхи кашниншĕн сывăх пулмалла пек. «Чăваш чĕлхи вырăс чĕлхине вĕренме чăрмантарать», – тенине илтетĕп хăш-пĕринчен. Мухтанса каламастăп: эпĕ нумай чĕлхе пĕлетĕп. Самарта тутар хаçатĕнче икĕ çул ĕçлерĕм. Манăн статьясем чăваш, тутар, ирçе хаçачĕсенче пайтах пичетленчĕç. Вырăсла, тутарла, нимĕçле, ирçелле хаçат-журнал çырăнса илеттĕм. Миçе çул шкулта нимĕç чĕлхи вĕрентрĕм тата! Вырăс чĕлхине пĕлме ыттисем пачах чăрмантармарĕç.

Маттур ача шкулта темиçе чĕлхе вĕрентсен те ĕлкĕрсе пырать. Начар вĕренекенни тăван чĕлхе грамматикине те алла илеймест. Тутар Республикинчи чăваш шкулĕсенче тăватă чĕлхе вĕренеççĕ: вырăс, чăваш, тутар, акăлчан. Лайăх вĕренекен, пурне те ăнкаракан сахал мар.

Халĕ çамрăксем кĕнеке вулама та пăрахрĕç тата. Ĕлĕк Аксура кĕнеке лавкки пурччĕ. Унта чăвашла кĕнекесем те сутатчĕç. Халĕ вăл та ĕçлемест. Чăвашла кĕнекесем тупма та çук. Эпĕ пуçламăш класри пĕр вĕрентекене чăвашла кĕнеке парнелерĕм. Çулталӑкран унпа паллашни çинчен ыйтрăм: «Вуламан-ха, вăхăт çук», – пулчĕ хурав. Учитель хăй вуламасть пулсан ачасене кĕнекене юратма ăçтан вĕрентĕр-ха вăл?

Чăваш çыравçисен хайлавĕсене вулатăп та, вĕсен хушшинче чăваш чĕлхишĕн чунне ыраттаракансем сахал марри курăнать.

Эпир камсем, ия, чăвашсемех,
Анчах пирĕн ачасем
камсем-ши?
Нивушлĕ, тусăмăрсем,
ĕмĕрлĕхех
Тăван сăмах ют пулĕ-ши
вĕсемшĕн?
**П.ÇĂЛКУÇ.**
Йывăр тăпри çăмăл пултăр
унăн.
Тĕлĕнтĕм эпĕ пĕтĕмпех,
Тăван чĕлхем çĕтрĕ-ши?
Е ăна та ман пекех
Йытта персе пачĕç-ши?
**Н.ИШЕНТЕЙ /«Çуралман ача сасси»/.**

**Виктор СИМАКОВ.**
Тутарстан.

ЭКСТРЕМИЗМ

# Туслăх пытăр ĕмĕре

**Шупашкар çамрăкне экстремистла ĕçсем тума йыхравланăшăн айăпланă. СК Шупашкарти Ленин районĕн следстви уйрăмĕ 17-ри йĕкĕт тĕлĕшĕпе приговор йышăнма материал çитеĕклĕ пухнă.**

Судпа следстви палăртнă тăрăх, шкулта вĕренекенскер 2015 çулхи çурла тата 2016 çулхи кăрлач уйăхĕсенче социаллă сетьсенчен пĕринче урăх ятпа икĕ сăнӳкерчĕк вырнаçтарнă, вĕсен айĕнче ытти наци тĕлĕшпе пусмăрла ĕçсем тума чĕнсе çырнă. Тĕрлĕ халăха пĕр-пĕрне хирĕç тăма йыхравлани те пулнă унта.

Следстви ĕçĕсем иртернĕ вăхăтра йĕкĕт килĕнчи компьютерăн система блокне те, карас телефонне те илнĕ, психологипе лингвистика экспертизи иртернĕ. Яш ăс пухакан вĕренӳ учрежденийĕ тĕлĕшпе представлени çырнă, çамрăксене кунашкал преступлени тума хĕтĕртекен сăлтавсенчен хăтăлма хушнă.

Çамрăка айăплă тесе йышăннă, анчах çул çитменнине шута илсе ăна айăплавран хăтарнă. 18 çула çитиччен ывăлне ашшĕ-амăшĕн çирĕп пăхса тăмалла, çавăн пекех яшăн касхи 10 сехетрен ирхи 6 сехетчен килĕнче çеç ларма юрать.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

АЙĂПЛАВ

# Хĕрарăм та усалланать

**Элĕк районĕн миравай сучĕ 46-ри хĕрарăм тĕлĕшĕпе приговор йышăннă. Николаевăна çын сывлăхне ятарласа сиен кӳнĕшĕн айăпланă.**

Суд палăртнă тăрăх, кăçалхи çу уйăхĕн вĕçĕнче хĕрарăм пĕрле пурăнакан арçын килĕнче пулнă. Хăналаннă май иккĕшĕ хирĕçме тытăннă – хĕрарăм çĕçĕ ярса илнĕ те арçынна пĕр хутчен çурăмĕнчен чикнĕ. Николаева хăйĕн айăпне туллин йышăннă.

Хĕрарăм судпа малтан та айăпланнă. Йывăр тата вăтам преступленисемшĕн ăна ирĕкрен те хăтарнă. Арçынна суран кӳнĕ вăхăтра та унăн суд айăплавĕн тапхăрĕ иртмен пулнă. Пĕтĕм лару-тăрăва шута илсе ăна 9 уйăхлăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă.

Приговор вăя кĕмен-ха.

**М.СТЕПАНОВА,**
**Элĕк район прокурорĕн пулăшуçи.**



● САОНА.

**Доминикана – çул çӳреме юратакан кашни туристăн ĕмĕчĕ. Эпир те унта çитсе курма пултарасса шухăшлама та пултарайман паллах. Анчах нимĕнрен те хăрамалла мар иккен.**

**Отеле çитсе вырнаçсанах яланхи пекех вырăнти гидпа тĕл пулатпăр. Ют çĕршывра хамăра мĕнле тыткаламалли пирки панă инструкци – пĕр япала. Гид калани – пачах урăх.**



● ДОМИНИКАНА ПУКАНИСЕМ.

# Христофор Колумб йĕрĕпе



● ТИНĔС ÇĂЛТĂРĔ.

**/Малалли. Пуçламăшĕ 41-42-мĕш номерсенче/.**

## Хăрушсăрлăх урокĕсем

– Урама пит тухса çӳреме ан тăрăшăр, – хăрушсăрлăх урокĕсене вĕрентет Альфия. – Çывăхра лавкка пур, асăнмалăх сувенирсем, улма-çырла туянма пултаратăр унта. Анчах та ылтăн эрешсене сейфа хурса хăварăр. Тĕттĕмлениччен отеле çаврăнса çитме тăрăшăр. Урамра та, тинĕс хĕрринче те темĕн сутакан та пур. Укçăр хăвăрăн, çапах та наркотик ан туянăр тархасшăн. Йĕрке хуралçисем ку енĕпе çирĕп асăрхаса тăраççĕ... – Альфия сăмахне вĕçлесе ĕлкĕреймерĕ, канмашкăн маларах çитнĕ вырăс турисчĕ пычĕ ун патне: “Пирĕнтен пулăшу кирлĕ мар-и?” “Кирлĕ мар, – хуравларĕ хĕрарăм. Сассинче кăмăлсăрланни палăрчĕ. – Паян кăнтăрла хыççăн кăлараççĕ. Арăмне каларăм – кайса илтĕр. Манран çитет. Халĕ те виçĕ кун апат-çимĕç çĕклерĕм...”

Пирĕннисенчен пĕри чăтаймарĕ, мĕн пулнине ыйтрĕ. Альфия алă кăна сулчĕ. Наркотикпа çыхланмалла маррине тепĕр хут аса илтерчĕ. Участока çаклансассăн апат та çитермеççĕ-мĕн, вырăнти саккунсемпе килĕшӳллĕн йĕплĕ пралук леш енне питĕ нумай çуллăха лекме те пулать.

“Мĕн кирли отельре йăлтах пур” – çакна Альфия темиçе хутчен хытарсах каларĕ. Кунта çуккине экскурсисенче курма пулать. Автомашина тара илсе хăйсем тĕллĕн çӳреме юратакансене те вăл васкама хушмарĕ. Çулсем тӳлевлĕ, экскурси турĕнчен те хаклăрах. Вырăнти сахăр тростникĕн магначĕсем акă, Мексикăри пуян çемье, çулшăн тӳлес мар тесе кĕпер хывнă – капла йӳнĕрех. Мотоцикл тара илме те хыпаланмалла мар иккен. Вырăнти халăх, çĕршыв хыснине туризм самай пысăк тӳпе хывать пулин те, ют çĕртен килекенсене хапăлах мар. Мотоцикла ятарласах пырса тапса йăвантарма, хăйсем çав хушăра алла е урана таптаса каçса кайма пултараççĕ. Пĕтрĕмĕр, мĕнле халăх пурăнать кунта?!

## Хулара – хамăр тĕллĕн

Те Альфия сăмахĕсем витĕм кӳчĕç, те вăхăт пулмарĕ – хулана кану вăхăчĕ вĕçленес умĕн кăна тухма май килчĕ. Чăнласах, юмахри пек тинĕс хĕрринчен пĕр самантлăха та пăрăнас килмест. Тухмашкăн сăлтавĕ те питех çукчĕ-ха. Ĕçмелли-çимелли – ресторанра мăй таран. Кун пекех çитернине ниçта та курман. Кашни апатрах – тăватă тĕрлĕ какай: сысна, пăру, чăх, кăркка. Вырăс апачĕпе те сăйлаççĕ: яшка, пăтă... Ирхине чăх çăмартине кăна тăватă тĕслĕ хатĕрлеççĕ. Устрица яшки те çисе пăхрăмăр. Çавăнпа швед сĕтелĕ нимĕн чухлĕ те йăлăхтармарĕ. Хулана, тĕрĕссипе, курас килнипе кăна тухрăмăр.

Вырăнти халăх мотоциклпа ытларах ярăнать. Çине-çинех чупаççĕ вĕсем. Çуран çӳрекен çукпа пĕрех. Хĕрĕмсене сырăнасран хăранăччĕ те, çук, йĕркеллех, никам та сĕмсĕрленмерĕ, куçпа ăсатнине кăна сăнарăм. Лавккана шыраса утнă май ăçталла каймаллине çынсенчен те ыйтрăмăр. Хаваспах ăнлантарчĕç, аллисемпе сула-сулах кăтартрĕç.

Урамсем таса мар. Анчах çулĕ – яп-яка. Ытларах уйрăм çуртсенчен пурăнаççĕ. Туристсемшĕн кăсăклă урама çитетпĕр. Сувенирсем, ытти-хытти сутаççĕ. Пире “Доминикана” тесе çырнă кепкăсем килĕшрĕç. Хакĕ – 10 доллар. Кунта вырăнти валютăна – песо – кăна мар, курспа килĕшӳллĕн доллар та йышăнаççĕ. Анчах паянхи курс – пĕр-икĕ çул каяллахи мар ĕнтĕ. Арабсемпе хаклашнине аса илсе кунта та тавлашма пăхатпăр. Мĕн тетĕр? 10-ран 5-е çитертĕмĕр вĕт! Эпĕ чĕлхене акăлчанла хуçкаланине ют çĕршывсенчи юлташĕсемпе Интернет урлă хутшăнакан хĕрĕм сăнаса кулса вилет. Култăр-иç. Сутуçăпа пĕр-пĕрне чиперех ăнлантăмăр вĕт. Хак чакарма пултартăм. Урăх мĕн кирлĕ тата?

Доминиканăра туристсем асăнмалăх сăн-питсĕр пукане туянаççĕ. Тĕп вырăнта, паллах, ром. Тата – мамахуана. Ун пирки кунта киличчен илтмен те. Юман хуппи çинче тытнă шурă тата хĕрлĕ эрехе пылпа хутăштараççĕ. Рецепчĕ, чăн та, темĕн тĕрли те пур. Хаярăшĕ – 37 градус. Ĕçме те тутлă. Çапах та чей вырăнне усă курмалла мар, пуçа ай-яй! лайăх минретет. Доминиканăран çавăн пекех юлташсем валли парне сигара илсе тухаççĕ. Кунти шăккалатпа какао та чи пахалăхлисенчен пĕри шутланать. Темĕн те илес килет те, анчах та хаксем пирĕн патринчен виçĕ хут пысăкрах. Çапах та ромсăр киле мĕнле таврăнăн? Сигари юрĕ-ха. Унсăр пуçне мамахуана тумалли юман хуппине туянатпăр. Мĕн, шурă тата хĕрлĕ эрех хамăрăн çук-им пирĕн?

## Саона-Баунти – çăтмах кĕтесĕ

Хаксем пирки каларăм ĕнтĕ. Экскурси те – çав шутрах. Çын пуçне – 100 доллар. Унран йӳнни çукпа пĕрех. “ВДВ сафари-шывсиккине” кайса курас кăмăл пурччĕ. Виççĕмĕре 18 пин тенкĕ кайса ларать. Уншăн манăн 1 уйăх ĕçлемелле. Анчах татса памалла мар ыйту пур-и вара? Шывсиккисем курнă-ха. Çĕр айĕнчи кӳлĕ кăсăклăрах маншăн. Вĕсене çĕршывăн тĕп хулинче Санто Домингора та курма пулать. Унпа пĕрлех хулипе хăйĕнпе те паллашма май пур. Çапла икĕ тур суйласа илтĕмĕр – тĕп хула тата Саона утрав. Тĕп хула çинчен иртнĕ номерте каласа кăтартнăччĕ. Халĕ кĕскен – Саона çинчен.

Тамăкпа çăтмах çинчен тавлашу вĕçĕмех пырать. Пĕрремĕшĕ пирки калаймастăп, анчах та иккĕмĕшĕ пирки пачах та ан иккĕленĕр – çăтмах чăнласах пур. Доминиканăри Саона утравĕ вăл. Çĕрме пуянсем те, чи çутă çăлтăрсем те çӳреççĕ унта. Голливуд çăлтăрĕсен тата пуянсен Санто Домингоран инçех мар хăйсен хупă хули пур. Айккинчи çынсене кĕртмеççĕ унта. Хулара йăлтах – хăйсен, çав шутра – пляж та. Анчах та вĕсем унти тинĕспе çырлахмаççĕ – чаплă шутланмасть вăл. Хупă хулари çурчĕсене – пирĕнле дача пулать-тĕр – çăлтăрсем АП-Шран икĕ сехет вĕçеççĕ, хăйсен ятарлă аэропортĕнче чарăнаççĕ. Унтан хăйсен яхтисемпе Саона çине канма каяççĕ. Ричард Гир, сăмахран, яланах унта канать.

Саонăн тепĕр ячĕ – Баунти. Çапла, рекламăна шăпах çак утрав çинче ӳкернĕ. Утрав йĕри-тавра – коралл рифĕ. Унта темĕн тĕрлĕ пулă та курма пулать: мурена, чĕрĕп-пулă, попугай-пулă, скат... Пире вара нимрен ытла тинĕс çăлтăрĕсем илĕртрĕç. Пуçа шыва кăшт чиксенех курма пулать вĕсене, хумсен айĕнче лăпкăн чӳхенекенскерсене. Анчах шывран кăларсан 10 çеккунтранах вилеççĕ мăнтарăнсем. Юрать-ха, гида ĕненсен, вилнинчен те хăвăртрах ĕрчеççĕ хăйсем. Çакă пулăшать те вĕсене упранма.

Саона экскурсийĕ... ӳсĕр халăхпа асра юлчĕ. Паллă ĕнтĕ, вырăссене /пирĕн çĕршывран пынисем вырăнтисемшĕн пурте – вырăс/ пĕр яхтăна пуçтарнă. Каялла катамаранпа таврăнтăмăр. Раççей тĕрлĕ хулинчен пуçтараннă 30-а яхăн турист тухрăмăр çула. Утрав çине çитиччен хĕрме ĕлкĕрчĕç. Пуринчен ытла кӳршĕсем – Тутарстанран çитнĕ икĕ пике – палăрчĕ. Эпир тавралăх илемĕпе киленнĕ вăхăтра хайхисем... арçынсене çыпăçрĕç. Пăхас мар – пĕр яхта çинче куç тата ăçта кайтăр-ха? Ыттисем вырăнти вĕри ташăсен картне ларма хăтланса кĕлеткисене авкаланă-хуçкаланă вăхăтра, хăшĕ-пĕрин чиперех пулать тата, кусем гида çавăрма ăнтăлчĕç. Александр, темĕн те курнăскер, айккинелле пăрăнма васкарĕ. Чиперккесенчен пĕри арăмне отельре хăварнă капан пек арçын ачашлăвне хирĕçлемерĕ. Тепре пăхнă çĕре хайхисем... яхта çинчи çетка çине ыталашса кĕрсе выртнă. Тĕрĕсрех, пике арçынна хăй айне тунă. Тепри хура ӳтлĕ, тачка туталлă негр çумне çилĕм пек çыпăçрĕ. “Эй-тур-тур, çаксен те ашшĕ-амăшĕ пур вĕт”, – мăкăртататăп ăшăмра.

Ку та юрĕ-ха, ячĕ те хăйсен, кĕлетки те... Икĕ çулсенчи арçын ача вăт каялла чĕррĕн çаврăнса çитеймесрен питĕ хăранăччĕ. Ашшĕ ура çинче аран тăракан пулчĕ вĕт, амăшĕ те пепки çинчен маннă. Пĕчĕкскер никам куриччен палуба çине упаленсе хăпарса каять. Шуса шыва ӳкме патнех çитнĕ самантра е пĕри, е тепри ачана урараn, алăран ярса илсе каялла сĕтĕрсе антарать. Юлашкинчен çакă пурне те йăлăхтарса çитерчĕ курăнать. “Пăхăр ачăра!” – тени илтĕнме пуçларĕ. Телее, çырана хайхискер каялла чиперех таврăнчĕ. Пристаньрен отеле автобуспа таврăнмалла. /Çул çинче “Парк юрского периода” фильма ӳкернĕ каньон çумĕпе иртрĕмĕр. Нимех те калаймăн – чăнкă/. Хула урамĕпе ушкăнпа пыратпăр. Халăх утакан çĕртре машинăсем хăвăртлăхне чакараççĕ. Акă вĕсенчен пĕри пире хăваласа çитсе майĕпен иртсе кайрĕ. Арçын ачан ашшĕ сикрĕ те... унăн багажник хыçĕнчи саппаслăха çакăнса тăракан урапинчен çакланса малалла ларса кайрĕ. Арăмĕ кăшкăрса ун хыççăн чупрĕ. Ача ăçта?! Ун-кун пăхкаласан курах кайрăм – Саона гичĕсенчен пĕри, ватă негр, йăтса утать хайхискерне...

## Ирĕклĕх

Кирек ăçта çитсен те вырăнти халăх пурнăçĕ çинчен ыйтса хăшкăлтаратпăр гидсене. Кунти çемьесем нумай ача çуратни палăрать. Мĕн сăлтавпа? Патшалăхран пулăшу кĕтсе илмелли çук иккен. Пенси те – ячĕшĕн кăна. Вăл çук тени тĕрĕсрех те пулĕччĕ. Пурнăç тăршшĕпе çын хăй мĕн чухлĕ пухнă – çавна кăна тӳлет патшалăх. Анчах та сак тулли ача çуратнă хĕрарăмăн хăçан ĕçлемелле? Чăн та, çие юлнă хĕрарăм “чирлĕ” шутланмасть унта. Декрет отпускĕ çинчен калаçмалли те çук. Çуратас умĕн те, хыççăн та кĕске вăхăт кăна параççĕ: çие юлни 8 уйăх çитсен ăсатаççĕ, ача 3 уйăх тултарсан ĕçре каялла кĕтеççĕ. Тухмарăн, ĕç вырăнне çухатрăн. Анчах та тепре пăхнă çĕре хĕрарăм каллех – пысăк хырăмлă. Пепкисем ӳссе çитсен хăшĕ те пулин çынна тухасса, йĕркеллĕ шалу илсе çемьене пулăшасса шанса нумай ачана кун çути кăтартать ашшĕ-амăшĕ.

Вĕренӳ, медицина – йăлт уйрăм харпăрлăхра. Патшалăхăн та пур. Анчах та хăйне хисеплекен çын унта нихăçан та каймĕ, ун пек шкул та, больница та – чи чухăннисем валли кăна. Вĕсене вырăнтисем “отбросы общества” теççĕ.

Пăшал – ирĕклĕ сутлăхра. Анчах та ăна урамра пурне те хăратса силлесе çӳреме юрамасть. Килте хăвна хӳтĕлеме – тархасшăн. Çынна тапăнса 10-15 хутчен пенĕшĕн айăплама пултараççĕ. Хаярлăх шутланать ку. Пурнăçна тата пурлăхна хӳтĕлесе çынна пĕрре персех вилмеллех шаплаттарни вара саккуна пăсни шутланмасть. Уншăн айăпламаççĕ.

Хуласенче халĕ те геттосем пур. Санто Домингори кĕпер айĕнче, сăмахран, наркомансем, вăрăсем, çын вĕлерекенсем тĕпленнĕ. Ара, унта, хĕл пулманнине кура, урамрах пурăнма пулать вĕт. Анчах та вăл вырăна пырса кĕрессинчен Турă сыхлатăр. Каялла чĕррĕн тухасси пирки Роман гид та иккĕленет. Кăларса ярсан та юлашки йĕме те хывса юлĕç. Тепĕр чухне йĕркелĕх хуралçисем пырса сĕкĕнеççĕ – кама та пулин шыраса. Ун пек чухне унта чăн-чăн вăрçă пуçланать.

**Рита АРТИ.**

Автор сăнӳкерчĕкĕсем.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**





## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Пулăпа хĕрлĕ кăшман салачĕ



**1 сельдь пулă, маринадланă 1 хăяр, 1 кишĕр, 1 хĕрлĕ кăшман, 2 çĕрулми, 100 грамм сыр, майонез, петрушка, укроп кирлĕ.**

**Икерчĕ пĕçерме 1 çăмарта, 0,3 стакан сĕт, 1 апат кашăкĕ çăнăх, 0,5 чей кашăкĕ тип çу, тăвар хатĕрлемелле.**

Шăмминчен тасатнă пулла вĕтетсе турилккене хумалла, майонез сĕрмелле. Ăна теркăланă кишĕрпе витмелле. Унтан вĕтетнĕ хăяр, теркăланă çĕрулми хумалла. Кашни сийе майонез сĕрме манмалла мар.

Çăмартана сĕтпе, çăнăхпа, тăварпа, тип çупа пăтратмалла. Чустаран икĕ икерчĕ пĕçермелле.

Теркăланă хĕрлĕ кăшманпа сыра, ыхрана 2-3 апат кашăкĕ майонезпа хутăштармалла. Çак хутăша кашни икерчĕ çине сĕрмелле, çавăрмалла, 1,5 сантиметр хулăнăш касмалла. Салата хĕрлĕ кăшманпа сыр юлашки хутăшĕпе витмелле. Варрине касса кăларнă чечексене хумалла. Йĕри-тавра укроппа, петрушкăпа илемлетмелле.

### Торт

**1 банка çăратнă сĕт, 1 стакан крахмал, 1 çăмарта, чĕптĕм тăвар, 0,25 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

Çимĕçсене пăтратмалла. Чустана çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Торта духовкăра пĕçермелле. Сивĕнсен улма-çырлапа, шăккалатпа илемлетмелле.

### Суфле

**Консервланă 1 банка ананас, 400 миллилитр ананас йогурчĕ, 3 стакан сĕт, теркăланă 4 стакан кокос мăйăрĕ, шăнтнă 200 грамм çырла кирлĕ.**

Çимĕçсене миксерпа пăтратмалла. Креманкăна яриччен сивĕтмелле.

### Чăх катлечĕ

**0,5 килограмм чăх фаршĕ, пуçлă 2 сухан, 2-3 çĕрулми, 2 кишĕр, 1 çăмарта, вĕтетнĕ 100 грамм сухари, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă сухана ăшаламалла. Çĕрулмипе кишĕре теркăламалла. Çимĕçсене пăтратмалла. Çак хутăшран тунă катлетсене 1-2 стакан шыв хушнă çатмара 25 минут пăшăхламалла.

### Шухрут

**300 грамм пăру какайĕ, 200 грамм сысна ашĕ, 2 стакан рис, 500 грамм купăста, 1-2 кишĕр, пуçлă 1 сухан, техĕмлĕх кирлĕ.**

Теркăланă кишĕрпе çурма çаврашкан каснă сухана тип çупа ăшаламалла, вĕтетнĕ купăста хушса пăшăхламалла. Пĕрчĕлесе туранă какайпа риса уйрăммăн шыва ярса çурма пиçиччен вĕретмелле.

Çатмара какай ăшаламалла, рис, пахчаçимĕç хушмалла, тип çу ярса 30-40 минут пăшăхламалла. Ку апат вĕрилле те, сивĕнсен те тутлă.

### Банан рулечĕ

**0,5 банка çăратнă сĕт, 1 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, 3 апат кашăкĕ çăнăх, тип çу кирлĕ.**

**0,5 банка çăратнă сĕте 100 грамм услам çупа пăтратса крем хатĕрлемелле.**

Шĕвĕ чустана тип çу сĕрнĕ çатмана ямалла, 120 градус духовкăра пĕçермелле. Пашалу çине кремăн çур пайне сĕрмелле. Банан хурса рулет майлă çавăрмалла. Çиеле татах крем сĕрмелле. Вĕтетнĕ мăйăр сапма юрать.

### Килти шаурма

**2 лаваш, чăхăн кăкăр тĕлĕнчи пайĕ, 2 помидор, 2 хăяр, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, 2 апат кашăкĕ йогурт е хăйма, 2 шăл ыхра, укроп, тăвар, авăртнă пăрăç, кетчуп кирлĕ.**

Чăх какайне ăшаламалла. Помидорпа хăяра – тăваткалласа, сухана вĕттĕн турамалла, кишĕре теркăламалла.

Соус валли йогурта е хăймана вĕтетнĕ ыхрапа, укроппа, тăварпа пăтратмалла.

Лаваш çине какай, пахчаçимĕç хумалла. Çиелтен соус, кетчуп ямалла. Лаваша çавăрмалла.

### Çĕрулми икерчи

**Чуста çăрма 6 çĕрулми, 200 миллилитр шĕвĕ хăйма, 6 апат кашăкĕ çăнăх, 2 çăмарта, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

**Ăшне хума 300 грамм сысна какайĕ, 1 пылак пăрăç, пуçлă 1 сухан, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Кишĕре теркăламалла е аш арманĕ витĕр кăлармалла. Шĕвĕ хăйма, çăмарта, тăвар, пăрăç хушса чуста çăрмалла. Тип çупа çӳхе икерчĕсем ăшаламалла.

Вĕттĕн туранă какая, пăрăça, сухана тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Икерчĕ ăшĕ хатĕр те.

## ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Паха им-çампа апатлантаратпăр

Чечексене шăварас умĕн тăпра çине 1 чей кашăкĕ **сахăр** сапмалла. Е 1 стакан шывра 2 чей кашăкĕ сахăр ирĕлтермелле. Кун пек апатлантарăва эрнере пĕрре ирттереççĕ.

**Çăмарта хуппи** кальципе пуян. Вăл вара тăпра йӳçеклĕхне пĕчĕклетет. Çавăнпах тăпрана йӳçĕтекен минераллă им-çам сапнă чухне ăна çăмарта хуппипе хутăштармалла. Чĕрĕ çăмарта хуппине лайăх çуса типĕтмелле те май пур таран вакăрах вĕтетмелле.

**Банан хуппине** тураса типĕтмелле. Чечек куçарса лартнă чухне ăна уйрăммăн пĕр сий сармалла е тăпрапа хутăштармалла. Типĕ хуппа кофе авăртмалли машинăпа вĕтетсе тăпра çине сапма та, ăна шывпа хутăштарса шăварма та пулать. Кун пек апатлантару чечек çуракан ӳсен-тăраншăн уйрăмах паха. Çимĕçри кали çеçкере вăрах ларма пулăшать.

1 литр шыва 30 грамм **кĕл** ярса 1 эрне лартмалла, вăхăт-вăхăт пăтратмалла. Унпа чечексене сапмалла. Йывăç кĕлĕнче калипе фосфор, кальци нумай. Фосфор – ӳсен-тăраншăн паха элементсенчен пĕри.

**Кофепе чей** юлашкипе мульча хатĕрлеме юрать. Çавăн пекех вĕретсе ĕçнĕ заваркăна чечексем валли тепĕр хутчен хатĕрлеме май пур: 1 стакан чее 3 литр вĕри шыва ярса 5 кун лартмалла, унпа чечек-курăка сапмалла. Чечек куçарнă чухне куршак тĕпне вĕтĕ чул çине малтан типĕ чей сарсан аван. Кофепе чей хушни тăпрана çăмăллатать.

**Кĕрпе çунă шывпа** та усă курма пулать. Чечексемшĕн вăл та паха. Унта кремни, тимĕр, магни, фосфор пур.

**Сухан хуппинчен** хатĕрленĕ шыв чечек-курăка тĕрлĕ чир-чĕртен сыхлать. Ытларах чухне унпа чечеке пĕрĕхеççĕ, тĕрлĕ микроэлементпа пуянскер – апат вырăннех. Ăна хатĕрлеме 10-20 грамм хуппа 5 литр ăшă шыва ярса 4 талăк лартмалла.

**Апельсин хуппин** шывĕ чечеке пыйтланасран, ытти шăна-хурт ересрен сыхлать. Шыва хатĕрлеме хуппа 1 литр вĕри шыва ярса 4-5 сехет лартмалла. Сăрăхтарса пульверизаторпа сирпĕтмелле.

**Алоэ сĕткенĕ** – ӳсме пулăшакан им-çам вырăннех. Акиччен тĕрлĕ вăрра темиçе тумлам сĕткен хушнă шывра 8–20 сехет тытаççĕ. Алоэпе чечек шăварнă чухне усă курни те витĕмлĕ. Кун пек чухне 3 çултан кая мар ӳснĕ çулçă кирлĕ.

## СЫВЛĂХ

# Пыл – сиплевçĕ



### Чĕре чирĕсенчен

500 грамм пыл, иçĕм çырли, курага, хура слива, инжир, шăлан, вĕретнĕ 2 литр шыв кирлĕ.

Шăлана вăрринчен тасатмалла. Типĕтнĕ пур çимĕçе вĕретсе сивĕтнĕ шыва каçхине ярса лартмалла. Ирхине шыва тăкмалла. Шӳнĕ çырлана аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çак хутăша пылпа пăтратмалла.

Ăна куллен 2-3 хут пĕрер апат кашăкĕ çимелле. Çак хутăш чĕре чирĕсемпе аптăракансемшĕн уйрăмах усăллă.

### Иммунитета çирĕплетме

2 апат кашăкĕ пыл, 5 апат кашăкĕ шур çырли, 500 миллилитр шыв кирлĕ.

Шур çырлине вĕренĕ шыва ямалла, пыл хушмалла. Çак хутăша вăйсăр çулăм çинче 20 минут вĕретмелле. Вĕриллех сăрăхтармалла. Куллен 2-3 хут çуршар стакан ĕçмелле.

### Вирус çакланасран

2 апат кашăкĕ пыл, 3 апат кашăкĕ палан, 500 миллилитр шыв кирлĕ. Палана вăйсăр çулăм çинче 10 минут вĕретмелле, 1 сехетрен сăрăхтармалла. Палан шывне пылпа пăтратмалла.

Çак хутăша куллен кашни 2-3 сехетрен 1/3-шер стакан ĕçмелле.

### Вĕрилентерсен

2-шер апат кашăкĕ пыл, теркăланă панулми, авăртнă сухан кирлĕ.

Çимĕçсене пăтратмалла. Çак хутăша куллен 3-шер хут 1-ер апат кашăкĕ апатчен çимелле.

### Ӳслĕк ерсен

Горчичник хатĕрлеме 1-ер апат кашăкĕ пыл, типĕтнĕ сарпăрăç, çăнăх, 2-шер апат кашăкĕ кукурус çăвĕ, эрех кирлĕ.

Çăнăха, сарпăрăça пылпа, çупа, эрехпе пăтратмалла. Хутăша ăшăтса кăпăклантармалла.

Ăна тăвата хут хуçлатнă марльăпа чĕркесе кăкăр тата çурăм çине хумалла. Çиелтен клеенка татăкĕпе витсе çак вырăна ăшă тутăрпа е шарфпа çыхмалла. Горчичник шала кайнă ӳслĕкрен те хăтăлма пулăшать.

*Сипленме пуçличчен тухтăрпа канашламалла.*

## ПĔЛЕТĔР-И?

# Варикозран

200 грамм мускат мăйăрне 1 литр çутă эрехпе хутăштармалла. 10 кун лартмалла. Сăрăхтармалла. Кунне виçĕ хутчен 20-шер тумлам ĕçмелле.

# Юн пусăмне йĕркелеме

10 лимона çуса типĕтмелле, çаврашкан касса 3 литрлă кĕленчене тултармалла. Унтах çуршар литр пыл, алоэ сĕткенĕ, спирт /эрех те юрать/ ямалла. Кĕленчене хупласа тĕттĕм вырăна шăп та лăп 40 куна лартмалла. Кунне виçĕ хутчен апат умĕн çур сехет маларах 1 апат кашăкĕ ĕçмелле.

Ку эмел шăнса чирлесен те пулăшать.

# Шлаксенчен тасалма

1 стакан ăшă шыва 1 чей кашăкĕ пылпа 2 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ ямалла. Апат умĕн кунне виçĕ хутчен ĕçмелле. С витамин организмран шлаксене те кăларать, иммунитета та çирĕплетет.

Сĕлĕ кĕселĕ япаласен ылмашăвне йĕркелет, иммунитета çирĕплетет. 200 грамм сĕлле 3 литрлă кĕленчене ямалла. Унтах çур литр кĕвĕлнĕ сĕт, 1 апат кашăкĕ хăйма, 1,5 литр шыв хушмалла. Кĕленчене марльăпа çыхса витмелле те йӳçме ăшă вырăна лартмалла. Сăрăхтармалла, кастрюле ярса пĕчĕк çулăм çине вырнаçтармалла, пăтратса тăмалла. Вĕреме кĕрсенех çулăма сӳнтермелле. Апат умĕн çур сехет маларах çуршар стакан ĕçмелле.

Пылпа корица сĕткенĕ те организма тасатать, çиес килнине ирттерет. Çур чей кашăкĕ корицăна 200 миллилитр вĕри шыва ямалла. Сивĕнсен 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла. Ирпе-каçпа выçăлла ĕçмелле.

## ШУТА ИЛĔР

# Утюг йĕр хăварсан

Тепĕр чухне йĕпе марля витĕр якатмасан утюг тумтир çинче йĕр хăварать. Çавна май çи-пуç илемсĕрленет. Ăна тасатма 1:1 виçепе хутăштарнă уксуспа шывра йĕпетнĕ мамăк татăкĕпе сăтăрмалла.

Утюг температурине чакарма маннăран япала сарăхрĕ тĕк вăл вырăна суханăн каснă вырăнĕпе сăтăрмалла. Ку мел пулăшмасан шыва водород перекиçĕпе тата нашатырьпе хутăштармалла, унта мамăк татăкне йĕпетмелле те сарăхнă вырăна сăтăрмалла. Кăштахран вараланнă вырăн тасалĕ. Япалана вара тепĕр хутчен çумалла.

# Уксуспа, лимонпа

Электрочейникри кăма уксус лайăх тасатать. 3-5 апат кашăкĕ уксуса 0,5 литр шывпа пăтратмалла. Çак хутăша чейникре вĕретмелле. 1 сехетрен савăта çумалла, лайăх чӳхемелле. Электрочейнике 2-3 сехетлĕхе хутăштарман уксус ярса лартма юрать.

Микрохумлă кăмакана çу сирпĕнсе тулать. Ăна çуса тасатма çăмăлах мар. Витĕмлĕ çак меле шута илĕр. Лимон сĕткенĕ янă савăт лартмалла та кăмакана 10-15 минутлăха çутмалла. Унтан çупа вараланнă вырăна нӳрĕ татăкпа сăтăрмалла. Лимон сĕткенне 1 чей кашăкĕ апат соди хушма юрать.

## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

# Çамрăк курăнма

Йĕкĕр янахран, «картлашкаллă» мăйран, шыçмак питрен хăтăлас тесен пуçа пĕксе çӳрес йăлана пăрахăр. Сăмсана кăштах каçăртма хăтланни те илеме упрама пулăшать. Çывăрнă чухне питпе минтер çине выртмалла мар, çапла тусан та ӳт пĕркеленет. Çанталăк улшăннă вăхăтра тутлăхлантаракан кремпа усă курмалла. Пите маска хума ан ӳркенĕр. Пăтратса кăпăклантарнă çăмарта саррине пĕрер апат кашăкĕ пылпа тата глицеринпа хутăштармалла. Çак хутăша куллен 10-15 минутлăха пите сĕрмелле, унтан лĕп шывпа çуса тасатмалла. Пите, мăя массаж туни те витĕмлĕ. Ыйхă килменнипе аптрани, эрех-сăра ĕçни, пирус туртни, пит-куçа тĕрĕс мар тасатни те ӳте хăвăртрах ватăлтарать. Ытлашши килограмсенчен тăрук хăтăлни те ырă витĕм кӳмест.



# Ăçта? Кампа?

– О! Çитрĕн иккен. Тинех.
– Тинех. Вара мĕн?
– Каллех ĕçсе килтĕн-и?
– Эс ĕçтертĕн-им?
– Çĕркаç ăçта пултăн? Мĕншĕн киле килмерĕн? Чупкăн.
– Юлташсем патĕнче ĕнтĕ, урăх ăçта пултăр?
– Хăш юлташĕ патĕнче?
– Манăн юлташ нумай, çавах мар-и?
– Ăçтан çавах пултăр?
– Çемен патĕнче.
– Эпĕ унта пытăм, эсĕ çукчĕ.
– Ну, апла, Коля патĕнче.
– Эп унта пыман тетĕн-и?
– Э-э-э, ухмах пуç! Мансах кайнă. Валеркăсем патĕнче утă кĕртрĕмĕр-иç! Утă кĕртсе пĕтернĕ хыççăн юрă-кĕвĕ итленĕ.
– Унтан ăçта пултăн?
– Утă купи айне пулнă.
– Кампа?
– Санпа!
– Хăçан?
– Ыран!..

**Лидия САРИНЕ.**

**ЧУНРИ**

# Юлашки хут

Эпĕ Хурамал ялĕнче, улăм витнĕ çуртра çуралса ӳснĕ. Пӳртре хурсем те, путексем те, пăрусем те пĕрлех чупнă. Лупассем çӳллĕ марччĕ. Хĕлле юр хӳсе каятчĕ те эпир, ачапча, тăррине хăпарса юр ăшне сикеттĕмĕр...

Тăван ялта кашни çулах уяв йĕркелеççĕ. Кăçал эпир те тăвансемпе унта кайма шухăшларăмăр. Чиркĕве те çитсе килтĕм. Халăх нумайччĕ унта. Кӳршĕсем патне те кĕрсе тухас килчĕ. Анне юлташĕсемпе те курса калаçрăм. Манăн тусăм та Мускавран килнĕ иккен. Эпир унпа пĕр урамра ӳссе çитĕннĕ. Чун савни çинчен мана вăл систерчĕ те. Яшлăхри тусăм ялта пĕччененех пурăнать иккен. Арăмĕпе хĕрĕ çул çинчи инкеке пула вилнĕ. Ку хыпар манăн чĕрене ыраттарчĕ.

Тусăмпа курнăçнă ятпа лавккана та çитрĕмĕр. Хĕрсе кайнăскер юлташăма пĕрремĕш юратăвăм патне кайса килме ыйтрăм. Унăн çурчĕ умне çитсе тăнине сисмерĕм те. Эпир кил картине кĕрсен вăл пахчаран тухрĕ. Ун çине вăтанчăклă куçпа пăхрăм. Вăл пачах улшăнман – малтанхиллех хитре. Кулли хĕвел евĕр туйăнчĕ. Тĕпеле иртрĕмĕр. Пӳртре шăп. Темччен калаçса лартăмăр. Ĕлĕкхине аса илсен икĕ куçĕнчен куççулĕ юхрĕ. Иксĕмĕр те пĕр-пĕринчен вăтаннă эпир. Чуп тума мар, ыталама та именнĕ.

Уйрăлма йывăр пулчĕ, чĕрем ыратрĕ. Манăн та упăшка вилни виçĕ çул ĕнтĕ. Яшлăхри тусăм ăсатма тухрĕ. Мана вăл хыттăн ыталарĕ те хăй çумне пăчăртарĕ. Ăшă-ăшă хум çапрĕ, чĕрем ирĕлчĕ. Манăн та куççуль юхрĕ. Унăн сăмахĕсем çепĕççĕн илтĕнчĕç. «Ман пата килетĕн-и?» – пăшăлтатрĕ вăл. Эпĕ чĕнмерĕм. Майĕпен утса кайрăмăр.

Тепĕр кун ир тăрса автобус чарăнăвне утрăм. Кантăкран пăхса пынă май тăван ялпа сыв пуллашрăм. Хамăн юратăва та хăвартăм. Куç умĕнче унăн сăнарĕ çеç юлчĕ. Пĕр сӳннĕ вучаха каялла чĕртеймĕн. Чипер юл, пĕрремĕш юратăвăм.

**ЛЮБОВЬ.**

**ЮРАТУ ÇИНЧЕН САВĂЛАСА**

***Маргарита ПРОКОПЬЕВА***

## Çирĕп тĕвĕ салтăнаймĕ

Ик чĕре хушшинчи вĕçленмен
кĕвĕсем
Малтанхи туйăма сивĕтмерĕç.
Чĕр суран варринчи пирчейми
çĕвĕсем
Сан ятна асăмран вĕçертмерĕç.

Канăçа çухатса куççульпе çăвăнни
Ăшăмри асапа çăмăллатĕ.
Айăпна каçарма йăлăнса
ӳкĕнни
Телее çывхартма хăвăртлатĕ.

Чуна усрĕç малтан калайман
сăмахсем,
Сӳнекен çăлтăра ялкăштарчĕç.
Тĕлпулу çитнипе пĕрлехи
тĕллевсем
Анлă пурнăç çулне такăрлатрĕç.

Çыхăри чечексем хĕмленсе
тĕлкĕшсен
Çеçкине вăйлă çил салатаймĕ.
Çĕнĕ пурнăç тума калаçса килĕшсен
Çирĕп тĕвĕ текех салтăнаймĕ.

**ШĂПА**

# Пĕр-пĕрне юратсан...

Ивановсен çемйи ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмастчĕ. Светăпа Саша иккĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне пĕрлешрĕç. Часах Алеша çуралчĕ. Вăхăт иртсен кил хуçа заводра инженерта тăрăшма пикенчĕ, Света – шкулта.

Телейлĕ пулма пĕтĕмпех пурччĕ вĕсен: ăшăлăхпа çепĕçлĕх те, юратупа килĕшӳ те. Ывăлĕ те çитĕнĕвĕсемпе савăнтаратчĕ. Канмалли кунсенче яла çӳретчĕç.

Инкек ăнсăртран килсе çакланчĕ. Саша аварие лекнĕ хыççăн урасăр тăрса юлчĕ. Çакă усал тĕлĕк мар, чăнлăх иккенне йышăнма çăмăл пулмарĕ. Арçынна – уйрăмах. Çавăнпах вăл час-часах тарăхрĕ, кăмăлсăрланчĕ, кашни вак-тĕвекшĕнех вĕчĕрхенчĕ. Уншăн пурнăçăн мĕнпур илемĕ пĕр самантрах çухалчĕ.

Çак тапхăрта, паллах, Светăна тата йывăртрах килчĕ. Анчах вăл çав тери чăтăмлă пулчĕ. Çемьери çĕнĕ лару-тăрăва хăнăхнă май мăшăрне пурнăç малаллах тăсăлнине ĕнентерме вăй çитерчĕ. Хĕрарăм куçĕнчен пăхакан арçыннăн ăна шанмах, ĕненмех тиврĕ.

Çемьене тăрантарасси халĕ хăйĕн тивĕçĕ иккенне ăнланнă хĕрарăмăн вĕрентекен ĕçне пăрахма тиврĕ. Вăл кашни ир пасара тавар сутма утрĕ. Ывăлĕ шкула çӳрерĕ. Сашăна ватă амăшĕ пăхрĕ.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Арçын йăл кулакан пулчĕ. Мăшăрĕпе ывăлне май пур таран пулăшма тытăнчĕ. Света таврăннă тĕле çĕрулми шуратать-и, купăста турать-и – арăмĕн ĕçне çăмăллатас тет. Алешăпа килти ĕçе пурнăçлать, иккĕшĕ тĕрлĕ кĕнеке вулаççĕ, шахматла та выляççĕ. Хĕрарăм вĕсене часчасах тутлă кукăльпе сăйлать.

Вĕсем пĕр-пĕрне юратса телейлĕ пурăннине ăмсанакан унччен те сахал марччĕ. Кун пеккисем халĕ те пур-ха. Çапла, çемье инкеке парăнтарса малалла савăк кăмăлпа пăхма вăй-хал çитерчĕ. Кунта ытларах Света тивĕçĕ паллах. Мĕн терри асап витĕр тухнине хăй çеç пĕлет-тĕр. Йывăр лару-тăрура та таса туйăма сыхлама пултарчĕ мăшăр. Юратăва çухатмарĕç. Çакă пулăшрĕ те.

Пĕр-пĕрне чăннипех юратсан нимĕнле йывăрлăх та хăрушă мар иккен...

**ВАЛЕНТИНА.**



**ЭХ, ПУЛМАРĔ!**

# Камит

Эпĕ тутлă çиме юрататăп. Çав вăхăтрах арçынна илĕртме хĕрарăмăн ăна тутлă çеç çитермелле тенине йышăнмастăп. Сăн-пичĕпе те, кăмăлĕпе те илемлĕ пулмалла чун савнин. Паллах, вăл апат-çимĕç ăста янтăлани лайăх çеç. Анчах кун пеккине хальлĕхе тĕл пулмарăм-ха.

Эпĕ пельмень те юрататăп. Тĕрĕссипе, ăна кам килĕштермест пуль? Пирĕнтен инçех мар какай таврашĕн лавкки пур. Унта нумаях пулмасть вырăнтах пельмень туса сутма тытăнчĕç. Çамрăк ĕçченсем килнĕ терĕç. Кун пирки калаçма юратакан сутуçă Марье аппа пĕлтерчĕ. Темиçе хутчен пĕçерсе çинĕ хыççăн кунти апат эпĕ халиччен çинĕ ытти пелменьрен тутлăраххине ăнлантăм. Хамах миçе килограмм туянмарăм-ши? Çак апата пушшех юратма тытăнтăм. Тĕрĕссипе – ăна хатĕрлекене. Çатăрка ăшĕнчен яланах «о» саспаллипе вĕçленекен хушамат çырнă хут тухатчĕ. «Е.В.» тесе çапни те пурччĕ. Е Елена, е Екатерина, тен, Елизавета тесе шухăшлаттăм. Чипер хĕр тăрăшса ман валлиех пельмень туни те куç умне тухатчĕ.

Пурăнсан-пурăнсан çак хĕрпе паллашас кăмăл çуралчĕ. Ара, ман валли çак тутлă апата килтех янтăлатăр-иç. Йӳнĕрех те. Эпĕ какай авăртăп, вăл чуста çăрĕ... Шухăшăм аван пек туйăнчĕ – тĕреклĕ те ырă кăмăллă сутуçă ĕçлеме çамрăксем килнине калани те асăма килчĕ.



Çапла пулас савнипе паллашма пĕр кунхине лавкка хупма вăхăт çитсен васкарăм. Чечек çыххипе шăккалат та туянтăм. Кассăра тăракан Маруç аппа мана пулăшасса шанса пылак купченеçе ăна тăсса патăм.

– Тутлă пельменьшĕн тав тăвас тетĕр-и? – йăл кулса пăхать вăл ман алăри парнесене сăнанă май.

– Епле чухлатăр?

– Пĕрремĕш мар, – тет вăл малтанхиллех ăшшăн йăл кулса.

«Нивушлĕ кая юлтăм-ши? – вĕçсе иртрĕ пуçăмра. – Чипер хĕре халиччен тепри çавăрнах ĕнтĕ...»

– Вара? – тетĕп аран-аран. – Качча кайма ĕлкĕрчĕ те-и?

– Пурне те хирĕçлет, – ахăлтатсах кулать вăл. Çав вăхăтрах çаврăнса Женьăна хыттăн чĕнет.

Э-э-э, Евгения эппин. Малтанласа çăмăллăн сывларăмха, шанăç пĕтмен вĕт. Ку та лайăх. Анчах тепĕр самантранах лавкка варринчех чутах йăванаттăм. Ман ума... тем çӳллĕш каччă тухрĕ-тăчĕ! Çăнăх ăшĕнче хăй. Аллинче – йĕтре...

– Ывăнтарсах çитертĕр, – кăмăлсăрланать хăй.

Ман алăри чечеке илсе Маруç аппана тыттарчĕ те шалалла кĕрсе çухалчĕ. Эпĕ васкамасăр килелле уттартăм.

Çапла та пулать-мĕн... Чăн камит.

**ЙĂВАН.**



# Ирхи сасă

## Калав

**Мария МАРИ**

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/**

Çĕнтерӳçĕ салтаксенчен пĕри аласăр, тепри урасăр, виççĕмĕшĕ тăван киле çитсе курнипе çырлахрĕ-тĕр, суранĕсене пула ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ... Уксах-чăлаха пурте пĕрле пайларĕç ялта хĕрарăмсем. Ара, пурин те арçын çумĕнче ăшăнас, унăн антăхтаракан юратăвне туяс килет. Çапла Тарье çулĕпе утас текен хĕрарăм сахал пулмарĕ каярахпа. Пĕр касрах харăсах темиçе ача та çуралатчĕ. Вăл ӳсерехпе уттинчен, кăмăлĕнчен ашшĕне уйăратчĕç вăрăм чĕлхесем. Тарье те телейне татах шыраса пăхрĕ, анчах Турри ăна текех алла ача илме пӳрмерĕ.

Акă тепĕр кинемей те айккинелле пăрăнам пек пулчĕ. Куçĕ вут-хĕм сапса ялкăшса илчĕ. Вăл та асаилĕвĕнче пылак хумсем çинче ярăнчĕ ахăртнех. Укçине çак ушкăнри хĕрарăмсенчен чылай кĕçĕнрех. Тĕрĕссипе, ун пирки кинемей тесе калама та йывăртарах. Тивĕçлĕ канăва нумаях пулмасть кăна тухрĕ-ха вăл. Анчах ыттисем пек текех пилĕк авас темерĕ. Мĕн тесе авмалла? Пĕртен-пĕр пепки вĕренсе тухнă хыççăн çăкăрлă çĕре вырнаçрĕ. Халĕ çăвар карса амăшĕнчен пулăшу кĕтсе лармасть. Пачах тепĕр май, хăй çула май кĕркелесе тухнă чухне çывăх çыннине кĕсье туллиех укçа-тенкĕ парса хăварать. Çавăнпа Укçине пурнăç йывăрлăхĕ пирки шухăшласа пуçне пачах ватмасть. Пĕртен пĕр ыйту канăççăрлантарать ăна – хĕллехи вăрăм каççене кĕскетме те, çуллахи илемлĕ кунсемпе киленме те çумра юлташ çук. Пурччĕ-ха пĕри. Арçынсене самай улăштарнă хыççăн пĕрне яланлăхах хăй çумне кăкарнине шаннăччĕ Укçине. Анчах та шаннă кайăк яланхиллех йăвара пулмарĕ. Пĕр арçын хевтипе чун усрама хăнăхман мăшăрне такки ăнланса çитереймерĕ Тарас. Укçинене вара ялан мĕн те пулин çитместчĕ. Е шалăвĕ пĕчĕк упăшкин /иккĕшĕ саккунлă майпах хут уйăрттарнăччĕ-ха вĕсем/, е арçын ĕçĕнче халсăр, е тата хăйне çын çинче тыткалама пĕлмест... Хĕрарăм вара хăйне пыл хурчĕсен хушшинчи чечек пек туйма хăнăхнăччĕ. Çамрăк чух. Ара, çамрăк чухне пурте хитре. Ытлашши турткалашман пикесене тата каччăсем таçтан асăрхаççĕ?

Укçине нумай ачаллă çемьере ӳсрĕ. Асли пулин те ашшĕне ас тумастчĕ вăл. Ку ыйтăва – атте ăçта – амăшĕ те хуравлама васкамастчĕ. Çапла вара çемьере пилĕк ача пилĕк тĕслĕччĕ. Шкул хыççăн Укçине тӳрех вĕренме кĕчĕ. Амăшĕ чарма пăхнине тăнламарĕ. Ара, кĕçĕннисем тата тăваттăн вĕт. Шкулта тирпейлӳçĕре тăрăшакан хĕрарăм аслă пепкине вĕрентмешкĕн укçа ăçтан çитертĕр? Укçине пур йывăрлăха парăнтарма ĕмĕтленсе хуланах талпăнчĕ. Студентсен йышне лексен вĕреннĕ вăхăтрах ĕçлеме хăтланса пăхрĕ-ха вăл. Ял ачи ĕçрен хăрать-и? Малтанах амăшĕ пекех тирпейлӳçе вырнаçрĕ. Анчах та кунта ирех тăмалла, лекцисене çитиччен ĕçе вĕçлемелле. Ялан çывăрас килнипе вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайми пулчĕ хайхи. Пĕрремĕш сесси пĕтĕмлетĕвĕсем стипенди пулмасса систерсен амăшĕ хĕрне тем те пĕр каласа вăрçрĕ. Мĕнле пурăнмалла ĕнтĕ халĕ?

Хула пылакне шăп çак самантра туйса илчĕ те хĕр. Кĕлеткипе çӳллĕ те яштака, пысăк кăвак куçлă, вăрăм çырă çивĕтлĕскер тавра каччăсем явăнма пуçларĕç. Анчах та вĕсемпе кино каясси, пылак пăр çиесси пачах та илĕртмерĕ пикене. Студент хăй пекех студенткăна урăх мĕн шантарма пултарĕ ĕнтĕ? Укçине пуянраххине шырарĕ. Шыракан вара тупать теççĕ. Нимрен те, никамран та йĕрĕнмерĕ хĕр. Пĕри ăна пĕр каç пĕрле вырăн ăшăтнăшăн укça пачĕ, тепри хаклă эрешсемпе савăнтарчĕ, виççĕмĕшĕ канма пĕрле илсе çӳрерĕ. Шел те, çемье çавăрма сĕнекен кăна тупăнмарĕ вĕсен хушшинче. Укçине пурпĕр пуçне усмарĕ, хăй пурăнма вĕренсе çитнипе савăнчĕ. Кур-ха, стипендисĕр те, ĕçлемесĕр те пурăнма пулать иккен. Амăшне пулăшма та май тупрĕ вăл. Упăшка-и? Халĕ çамрăкха, пурнăçпа киленсе юлмалла. Çамрăклăх пĕрре килет тесе ахальтен юрламаççĕ-тĕр.

Вăхăчĕ вара иртрĕ. Университетран шик! шăхăрса вĕренсе тухрĕ Укçине. Ĕçе вырнаçрĕ. "Пыл хурчĕсем" пулăшнипе хваттерлĕ те пулчĕ. Пуçĕ шухăшпа тулма пуçланине кăна сиссе юлаймарĕ хайхискер. Вăл тăна кĕнĕ çĕре çамрăк хĕрсем, ĕнер кăна урамра çĕр çине йĕр чĕрсе вылянăскерсем, ӳссе çитме ĕлкĕрнĕ. Хулăн кĕсьеллĕ арçынсем вĕсем тавра сĕрлесе явăнма пуçланă. Хваттерĕн тăлăх чӳречинчен урамалла тунсăхлăн пăхса тарăн шухăша путрĕ Укçине. Капла пачах тăр-пĕччен тăрса юлма та часах вĕт. Ватлăхра шыв паракан та пулмĕ. Хĕрарăм савнийĕсене пӳрне хуçсах шутлама пуçларĕ – кам юлнă-ха обоймăра? Хайхисене палăртма пĕр алăри пӳрнесем те çитрĕç. Анчах та вĕсемпе те юлашки вăхăтра хăçан çыхăннине ас тумасть хăй. Вăрттăн шухăшпа хĕмленсе телефонне алла илчĕ хĕрарăм. Лини тепĕр вĕçĕнче хăйне çырлахтаракан сасă ниепле те илтĕнмерĕ. Пĕрин "абоненчĕ хуравламасть", теприн тĕл пулма вăхăт çук, виççĕмĕшĕ пачах та тытмарĕ. Аран-аран пĕрне ӳкĕте кĕртрĕ хĕрарăм. Ресторана илсе кайма, йăлтах хăй тӳлеме шантарчĕ. Апатланнă май арçын черккине, лешĕ куриччен, ятарлă эмел ярса парса аран-аран хăйĕн хваттерне астарса илсе çитерчĕ. Палăртнине пурнăçларĕ пурпĕр Укçине. Çак каç хăйне ятăн ача çуратма чĕри çумĕнче чун тĕвĕлерĕ.

Çакăн хыççăн кăшт лăпланчĕ пулас амăшĕ. Тепĕр тесен, çамрăк чухнехи хĕрӳлĕхĕ чакрĕ ĕнтĕ. Пулас пепки валли официаллă ашшĕ тупма та пултарчĕ Укçине. Çук, варта юлнине Тарасăн тесе ĕнентермерĕ, йăлтах тĕрĕссине каларĕ. Тарас, Укçинепе пĕр вăхăтра вĕреннĕ чухнех уншăн пуç çухатнăскер, пуринпе те килĕшрĕ. Ача çуралсан ăна йышăнчĕ, хăйĕн хушаматне пачĕ. Анчах мăшăр çулĕ пурпĕр йӳпленчĕ. Ачи ӳссе çитсе урăх хулана ĕçлеме тухса кайсан Тарас та, ăна хăйĕн пепки пекех пăхса çитĕнтернĕскер, ун патне куçрĕ. Ватлăха куçран Укçине пĕчченех пăхрĕ.

Виççĕмĕш кинемей вара çаплах сăмса айĕн мăкăртатма чарăнмарĕ. Куçĕ ахлатакан сасă илтĕнекен чӳрече çинчен каймарĕ. Калăн, кăкăрĕ-çурăмĕ çăмпа мăк пек хупланнă, тĕреклĕ хул-çурăмлă арçын кĕçех унта пырса тăрать те Марьене чеен мăч! куç хĕсет. Шăпах çакăн пекчĕ унăн юратăвĕ. Ялта пĕрреччĕ. Уншăн пĕр кас хĕрĕсем те, яла хăнана килекен пикесем те мĕн чухлĕ куççуль юхтарман пуль. Ваççа, мур, çакна хăй те лайăх пĕлетчĕ. Анчах унăн чи усал тĕлĕкне те Марье пырса çӳремен пулĕ çав.

Çуралмах инкеклĕ çуралнă хĕрача. Амăшĕ, фермăра ĕçлекенскер, ĕне пăхатчĕ. Хырăмĕ ӳссех кайсан та председатель ăна улăштарма çын тупаймарĕ. Ялан пĕр сăмахпа тăрантаратчĕ: "Тӳс-ха. Чăт-ха. Ыранпаянах татса парăп санăн ыйтăвна..." Татса пачĕ. Çав кун ферма вăкăрĕ ирех мĕкĕрме пуçласа тавралăха кисретрĕ. Кун пекки пĕрре мар пулнă та, кĕтӳçĕсем ăна та пăрса хăварас темерĕç, ĕнесемпе пĕрлех уя илсе тухрĕç. Ытти чухне хĕрарăм кĕтӳç унран тарса çӳрекенччĕ-ха. Ара, усалскер арçынсем çĕклесе çӳрекен вăрăм пушăран кăна кăшт шикленет. Лешсем пĕррех туртса çапаççĕ хайхискерне ураран, çивĕч пушă вĕçĕ чарнлаттарса пырса панине чăтаймасăр пăрăнатчĕ вăкăр. Хальхинче хĕрарăм темле майпа асăрханса çитеймерĕ. Нумай уттарас мар тесе ăна люцерна ани хĕррине тăма сĕнчĕç арçынсем. Ывăнса çитнĕскер кăштах канмашкăн тесе ларчĕ те кăтăш пулнă.

...Хĕп-хĕрлĕ кун. Хĕвел, ниепле те анаймасăр, айăн-çийĕн çаврăнса пăтранать. Пăчă. Сывлăш çитменнипе вăранса кайрĕ хĕрарăм. Куçне уçрĕ те... хăйне хăй ĕненмесĕр хăвăрт каялла хупрĕ. Унăн пуç тăрринчех хайхи капан пек вăкăр мăшлаттарса тăрать. Ăна люцерна шăрши илĕртнĕ ахăртнех. Вăхăтра асăрханă тăк хĕрарăм янавара хăратма хăтланса хăмсарса та тăмĕччĕ, айккинелле пăрăнĕччĕ. Пĕлет вĕт-ха, патакран пурпĕр хăрамасть лешĕ. Люцерну-масару, çав вăхăтра нумай çисе ярас çук. Анчах та хальхинче тармашкăн кая юлнă ĕнтĕ. Хĕрарăм тăма хăтланчĕ – мамăка çаврăннă ури итлемерĕ. Куç хӳрипе асăрхарĕ хĕрарăм – вăкăр çĕр кукалет. Çакă ырă мара систернине кирек кам та ăнланĕ. Патака алла илсе вăкăра сăмсинчен лектерес тесе пĕтĕм вăйран çапрĕ хĕрарăм. Лектереймерĕ. Лексессĕн те уншăн ку ачашлани кăна пулĕччĕ – патака туймасть те вăл. Юлашкинчен пырĕ çурăласла, чунĕ татăласла кăшкăрса ĕлкĕрчĕ хĕрарăм кĕтӳçĕ: "Пулăшăр-р-р!!!" Çак самантра аякĕ пĕçерсе кайрĕ. Хăйне вăкăр сывлăша çĕклесе ывăтнине ăнланса та илеймерĕ ахăртнех мăнтарăн.

Больницăра варти пепкене васкавлăн касса кăларчĕç. Шалти органĕсем арканнă хĕрарăма вара çăлса хăвараймарĕç. Пулăшу ыйтса кăшкăрнине илтсенех ытти кĕтӳçсем инкек пулнă вырăна васкană. Анчах та вĕсем чупса çитиччен вăкăр хĕрарăмпа сывлăшра мечĕк пек вылянă, чĕрнисемпе муталанă. Мĕскĕнĕн чĕри операци сĕтелĕ çинчех тапма чарăннă.

Шăп çак чĕрчуна пула инкеклĕ çуралчĕ те Марье. Тĕнче çине мĕн пĕчĕкрен хăрах куçпа кăна пăхатчĕ. Утма пуçласан хăрах ури тепринчен кĕскерехи палăрчĕ. Çавна пула ĕмĕр тăшшĕпех лăкăштăк-лăкăштăк уксахласа утать мăнтарăн. Ăс-тăнĕ енчен те ыттисенчен кăштах каярах юлса пырса аталанатчĕ çут тĕнчене вăхăтсăр, васкаса килме тивнĕскер. Каламасăрах паллă ĕнтĕ, каччăсем уншăн çапăçăва тухмастчĕç. Ташă касĕнчен киле пĕчченех таврăнатчĕ çуралма ĕлкĕричченех тăлăха тăрса юлнăскер. Ашшĕ пĕчĕкскерне пăхас темерĕ, урăх хĕрарăмпа явăçса тухса кайрĕ. Тăван-пĕтенĕн хӳттинче ăшша-сивве уйăрмасăр çитĕнчĕ хĕрача.

Анчах чунăн – хăйĕн йĕрĕ-йĕрки. Çуркунне çитнине тăлăх та туять, ачашлăхшăн, юратушăн тунсăхлать. Ваççа ун енне хăрах куçпа та çаврăнса пăхмасса хăй те лайăх пĕлет Марье. Анчах та чуна хушма çук-çке. Кашни каç минтере куççульпе çăвать хĕр. Турăран тархасласах пулăшу ыйтать. Ваççа пуçне çавăрассишĕн карчăксем патне те çитрĕ хĕр. Ара, лешсем темĕн те шантараççĕ-çке. Усси пулмарĕ. Çапах та тархаслани-йăлăнни, ырăран та, усалран та пулăшу ыйтни кирлĕ çĕре çитнĕ курăнать. Марье хăлхине кĕçех хыпар кĕчĕ. Ваççа шкул хыççăн малалла вĕренме кĕреймен. Балсем çитмен тет-и? Çапах та тĕллевĕнчен пăрăнас темен харсăр каччă. Çитес çул каллех экзаменсем тытма тĕв тунă, унччен вара çине тăрсах хатĕрленмешкĕн хăйне пулăшакан шырать. Марьешĕн чухах-ха ку. Кĕçĕн классенче ыттисенчен начартарах вĕренсе пыраканскер вăтам çулсене çитсен туртăнчĕ. Аслă ӳсĕмре те каччăсемпе çӳременскер предметсене кĕçех мăйăр пек шĕкĕлчеме тытăнчĕ. Пĕрле вĕренекенсем унран час-часах пулăшу ыйтма пуçларĕç. Экзаменра та тантăшĕсене çырса илмешкĕн пачĕ вăл. Ваççа, паллах, çакна пĕлмест мар. Çавăнпа Марье урамра тĕл пулса экзаменсем пирки сăмах хускатсан йĕкĕт хаваспах килĕшрĕ. Пĕлет-çке: çак хĕр ăна чăнласах пулăшма пултарать.

Хĕл çитрĕ. Марьепе Ваççа тăрăшсах тĕрлĕ предмета тишкерчĕç. Пĕрле вĕренме кăмăллă иккен тата. Хăйĕн пĕлĕвĕн никĕсĕ чăнласах çирĕпленсе пынине курса каччă савăнчĕ. Хĕрĕн кăмăлĕ те ырă тата. Иккĕшĕ Марье патĕнче тĕл пулнине кура хĕр савнийĕ – Ваççана вăл хăйĕн ăшĕнче çаплах чĕнетчĕ – пыриччен тутлă апат-çимĕç янтăлатчĕ. Ку енчен Турри кӳрентермен вара ăна. Ятарласа кĕнекесем те туянчĕ хĕр. Халĕ чаплă ресторанти шеф-повартан пĕрре те кая мар хатĕрлет вăл. Ăшша хăнăхнă кушак аçи пек, Ваççа йĕри-тавра мĕн пулса иртнине сисми те пулчĕ темелле. Унтан та ытла, кил хуçине килĕштерме те пуçларĕ вăл. Марье уксахласа утнине асăрхами пулчĕ, айăплă куçне хĕр çӳç пайăркипе хуплама вĕренсе çитнĕччĕ. Çапла çур çул вĕренӳ программи тăрăх хăвалană хыççăн Марье Ваççана килти экзамен тыттарма тĕв тунине пĕлтерчĕ. Каччă хаваспах килĕшрĕ. Ăнăçлă! Пур предмет ыйтăвне те пĕр йăнăшсăр хуравларĕ каччă. Хĕр ятарласа çăмăл ыйтусене суйланине, паллах, чухламарĕ те вăл. Марьене çакă кăна кирлĕ. Вăл чупса тенĕ пек уяв сĕтелĕ хатĕрлерĕ. Хăйне валли хĕрли, каччă валли, арçын мар-и вара вăл – сĕтел çине туххăмрах çутти тухса ларчĕ. Ваççа харсăррине харсăр та, пурпĕр эрехпе пит айкашман, ялта ятне ярса çӳремен. Пĕрер черкке çĕклесех хĕрчĕç хайхисем. Каччă çак каç хĕр килĕнчех çывăрма юлчĕ.

Мĕн пулса иртнине Ваççа тул çутăласпа кăна ăнланса илчĕ. Хĕр килĕнчен, никам та ан куртăр тесе, вăрă пек тухса тарчĕ. Марье ăна чарса тăмарĕ. Ваççа шăлаварне хыпаланса тăхăннине куç хупанкине вăрттăн уçса сăнарĕ. Ах, мĕнле чипер унăн савнийĕ. Çӳллĕ, тĕреклĕ... Эх, унран ывăл çуралсанччĕ! Ашшĕ пекех хитре пулсанччĕ. Ваççан кашни хусканăвне сывлама хăраса йĕрлерĕ Марье. Хăй вăраннине систермерĕ, юриех хыттăн мăшлаттаранçи турĕ. Çывăрать имĕш. Хăй вара савнийĕнчен куç вĕçертмерĕ. Пĕр каçлăх кăна пултăр, анчах та кĕçĕр Ваççа пуçĕпех унăн пулнă вĕт. Шурăмпуç кантăкран карăнатчĕ кăна-ха. Çавăнпа сĕмлĕхре кил хуçи хăйĕнчен куç вĕçертменнине сисмерĕ каччă. Пушмакĕсене алла илчĕ те шăппăн кăна пӳрт умне шăвăнчĕ. Унтан такам пуçран чукмарпа кĕрслеттернĕ пек тухса вăркăнчĕ. Марье килне текех ура та ярса пусмарĕ вăл. Калăн, вĕсен хушшинче нимĕн те пулса иртмен. Хĕрпе тĕлпулу шырамарĕ. Çакăн хыççăнах ялтан та тухса кайрĕ. Хулара ĕçе вырнаçнă терĕç ун пирки.

Тăхăр уйăх иртсен Марье ывăл çуратрĕ. Ачан кăтра пуçне кура унăн ашшĕ кам пулнине пĕлмешкĕн пуç çĕмĕрме те тивмерĕ инкесен. Ваççа ялтан мĕншĕн çапла хыпаланса тухса кайни те тинех уçăмланчĕ. Ял çăварĕ хапха мар. Çав каç хăй вăрă акса хăварнине çитернех ĕнтĕ ун патне. Анчах та арçын çулсем иртсен те ывăлне курма килмерĕ. Ялта хăналаннă май та Марье пурăнакан урама лекес мар тесе тăрăшрĕ. Хăнара та нумай тытăнса тăмастчĕ. Яла пĕччене нех килсе çӳрекенскер хулана таврăнма хыпаланатчĕ.

Пĕрре арçын тутанса курнă хĕрарăм вара хăйне ирĕке ячĕ. Кампа та пулин çемье çавăрас шухăша вăл тахçанах пăрахăçланă. Капла та хĕрарăм нумай, арçын сахал, кам пăхтăр ун çине? Арăмĕсенчен йăлăхса-ывăнса çитнĕ чупкăнсем ун патĕнчен тухнине çăмăл ыйхăллисем пĕрре мар курнине калатчĕç.

...Акă чӳрече умĕнче кĕлетке курăнчĕ. Хĕрарăм. Çӳçĕ-пуçĕ саланнă. Йăрăс пĕвне илемлĕ пурçăн халатпа хупланă та, кĕлеткин чăмăр пайĕсем ун витĕр те уççăнах илĕртӳллĕн палăраççĕ. Пылаккăн карăнчĕ хайхискер. Унтан урамалла тинкерчĕ. Ак тамаша! Хăй çине виçĕ мăшăр куç кĕç-вĕç шăтарас пек тинкернине асăрхарĕ вăл. Вăтанас шухăш пулмарĕ-ха унăн. Мĕн пулса иртнине, кинемейсем йăлтах илтнине ăнланса илчĕ пулас та тавралăха тыткăнласа хыттăн янраттарса ахăлтатса кулса ячĕ. Янкăс сасă çамрăклăха путнă хĕрарăмсене каялла таварчĕ. Хăйсем чӳречерен куç илми сăнанине тинех ăнланса илчĕç хайхисем. Сура-сура виççĕшĕ виçĕ еннелле саланчĕ.

## Ирина ХАКАМАДА:

# “Пурнăç çулне кавирпе витмен”

### Политик, писатель, телеертўçĕ пурнăçа улăштармашкăн васкама хистет

**1. Улшăнусене тĕрĕс пуçламалла**

Текех кун пек чăнласах пĕр кун та пурăнма пултараймастăр: е вилетĕр, е лапчăнатăр... Эсир çак тапхăра çитнĕ-и? Апла тăк чăнласах улшăнмашкăн вăхăт çитнĕ. Тунсăх туйăмĕ ăшне путнипе кăна нихçан та ан пуçлăр улшăнусене – ĕç каймĕ. Чăнласах аптăранă кăвакал пек кутăн чăмма пиçсе çитнĕ тĕк – тархасшăн. Саламлатăп, эсир тĕпне çитнĕ. Унтан вара тапса ярса çўлелле хăпарма пулать.

**2. Тĕллев лартăр та... тăхтав тăвăр**

Пĕчĕк тăхтав та пулин кирлех. Киленў шырама ан васкăр, пурнăç тĕлĕшпе ўпкелешсе калаçмашкăн юлташăрсем патне те ан чупăр. Çывăх çыннăра ан тапăнăр.

Пачах тепĕр май, хăвăр тĕнчере хупланăр. Талăклăха та пулин. Пĕчченлĕхе юлăр. Телефона сўнтерĕр. Пуç мимине хушу парăр: манăн хама çĕнĕрен тупмалла, малалла ăçталла талпăнмашкăн тĕллев палăртмалла.

Çак ыйтăва ăшăрта хут листи çине те çырма пултаратăр, ăна, фантази шайĕнче, магнитпа усă курса пĕр-пĕр çĕре çирĕплетсен те юрать. Калăпăр, сивĕтмĕш çумне. Магнит мĕн тĕслĕ-ха сирĕн? Хĕрлĕ, сарă, тен, эсир ăна таçти çулçўреврен илсе килнĕ?

Çыпăçтартăр-и? Халĕ хут татки çинчен манăр та ал ĕçĕпе аппаланăр. Шăпах пўрнесем ĕçлеччĕр. Е алăра шар йăвантарăр, е ўкерĕр. Çыхма та пултаратăр. Чи кирли, пуç, куç, чун хăвăра килĕшекен ĕçпе аппалантăр. Çакăн хыççăн тутлă шăршăллă ваннăра çăвăнăр, унта иланг-иланг, лаванда эфир çуне хушсан юрать. Çакăн хыççăн лăпкăн кăна çывăрма выртăр.

**3. Ним пулман пек малалла пурăнăр**

Эсир вăраннă çĕре каннă пуç çакна систерĕ – йăлтах лайăх пулать. Чунра та çăмăлланĕ. Чи кирли – тăраниччен çывăрма тăрăшăр. Малашлăх пирки пуç ан çĕмĕрĕр, мĕн тумалли хăй тĕллĕнех уçăмланĕ.

Тен, малашлăх тĕлĕкре курăнĕ. Тен, пĕр-пĕр лару-тăру уçăмлатĕ. Эсир пуç мимине хушу панă вĕт – шанăр ăна.

**4. Хăрама пăрахăр**

Паллах, пурнăçа улăштарма çăмăл мар. Пирĕнте вырăс характерĕ пытаннă – камăн çурăмĕ хыçне те пулин пытанмалла, пĕр-пĕр утăма хамăр тĕллĕн тума тăхтамалла. Шухăшлама пултаратпăр-ха эпир. Шухăш вĕççĕн пурнăçа улăштарма яланах хатĕр. Вăт çакăн тĕлĕшпе пĕрремĕш утăм тума вара хăратпăр. Йĕри-тавра пурте пире хирĕç чухне шиклĕх туйăмĕ вăйланать кăна.

Мĕн пулăшать-и? Калăпăр, эсир мĕнрен хăрани чăна çаврăнать. Çаврăнтăр. Кун пек чухне ăна лупа витĕр тишкерме çăмăлрах.

Калăпăр, эсир ĕçрен кайма, упăшкăра пăрахма е ачăрсенчен уйрăлма шикленетĕр. Çакă вара чăн пурнăçра пулса иртнĕ тейĕпĕр. 20 минут та пулин çак лару-тăрура пурăнса пăхăр. Сирĕн пуçра кинофильм çаврăнать. Унтан эсир кинопленкăна илетĕр те чĕртсе çунтаратăр. Кĕлпе пĕрле сирĕн шиклĕх те çухалать – мĕн пуласси пулнă ĕнтĕ.

Çакна ăша хывма тăрăшăр: телейлĕ пулас килет-и? Ку вара сирĕнтен хăвăртан кăна килет.

**5. Хăвăр вăя шанма хăнăхăр**

Çапла, теветкеллĕ утăм тума çăмăл мар. Çак тĕллевпе философие улăштарăр: çак пурнăçра хăвăра хăвăр кăна пулăшма пултаратăр.



Урăх никам та. Ну, çук вăл – урăххи! Çемье те, упăшка та, çĕршыв та, пенси фончĕ те, чиновник та пулăшмĕ сире. Хăвăр кăна.

Çакна тата сире иккĕмĕш пурнăç никам та памассине ăнланса илсенех пĕрремĕш утăма тума çăмăлланĕ.

**6. Пурнăçпа тан пырăр**

Енчен те ăнăçу çулĕпе утас тетĕр тĕк хăвăр мĕнле вăхăтра пурăннине ан манăр. Тĕлĕнмелле саманара пурăнатпăр эпир. Информаци çĕнĕ технологийĕсем, пулăмсем пурнăçа тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа улăштарса пыраççĕ. Çавăнпа та лăпкăлăх çинчен манма тивет, лăпкă пурăнас текенсен вара – ăнăçупа сывпуллашма.

Вăхăтпа тан пырăр, улшăнма ан хăрăр, кашни кун... çĕнĕрен çуралăр, йывăрлăхсене йышăнма, вĕсене парăнтарнинчен киленў илме вĕренĕр. Вара сире ăнăçатех.

Теветкеллĕ çын пулма ан хăрăр. Çапах та теветкеллĕ пĕчĕк утăмсем кăна тăвăр – унсăрăн шăтăка ўкме те часах. Çивĕч те çăмăл кĕлеткеллĕ пулăр – ĕçе, киле, упăшкана хăть те хăш самантра улăштарма хатĕр тăрăр. Халĕ кризис – пĕр вырăнта хытса тăма юрамасть.

**7. Хăвăра юратма вĕренĕр**

Юрату чи малтанах яваплă хисеп çинче тытăнса тăрать. Апла тăк пĕр чарăнми вĕренмелле. Сире хутшăнусем тивĕçтермеççĕ-и? Улăштарăр, сирĕншĕн кам та пулин яваплă утăм тăвасса ан кĕтĕр. Юлташ сахал-и? Вĕсен йышне ўстерес енĕпе ĕçлĕр. Вĕсем хăйсем сирĕн пата пырасса кĕтсе ан ларăр.

Хăвăр пирки хитре мар тесе шухăшланă чухне çакăншăн макăрса ларнипе çырлахмастăр вĕт-ха, мĕн те пулин улăштарма тăрăшатăр: стиль, çи-пуç, кĕлетке, прическа... Никама та шанса лармасăр хăвăрах тăрăшатăр. Палăртнине пурнăçа кĕртме май килсен хăвăра хисеплеме, шанма пуçлатăр. Çакă ĕнтĕ вăл юрату. Ун çине таянса пурнăçа улăштарма тытăнмалла.

Анчах та кун пек чухне эгоиста çаврăнассинчен сыхланмалла. Кирек мĕнле хутшăну та, çав шутра – пепке те, компромисс ыйтать. Çывăх çыннăра нихăçан та сутмассине пĕлетĕр эсир, анчах та лару-тăрăва хăвăртан çўллĕ пулмашкăн памалла мар.

Юрату пур йывăрлăха та çĕнтерме пулăшать: ўксен – тăма, тăхтав хыççăн малалла талпăнма, депресси авăрĕнчен тухма. Пурнăç çулне кавирпе витмен. Анчах теветкеллĕ утăмсăр ăнăçу тума çук – çакна эсир ăнланатăр, йышăнатăр.

Çакăн пек пулмалла вăл – пурнăç. Шурлăхри пек лăпкă пурăнма май килмĕ. Хĕвеллĕ пĕр-пĕр кун йăлтах лайăх пуласса, пĕтĕм ыйту хăй тĕллĕн татăласса кĕтсе ларатăр–и? Ан улталăр хăвăра. Ун пек пулмассине хăвăрах пĕлетĕр. Çакна кĕтсе ларсан юлашкинчен çав шурлăха мăй таранах лакса ларма пулать. Унтан вара тухаймăр та.

**8. Телее хăвăр туптăр**

Юлашки икĕ çул çакăн пек лару-тăрăва лекрĕм эпĕ – упăшка пĕр пус та ĕçлесе илейми пулчĕ. Ку çитменччĕ – парăма кĕрсе кайрĕ. Пĕтĕм яваплăх ман çине куçрĕ. Эпĕ шăвшав çĕклесе ăна асаплантармарăм. Вăл айăплă мар. Самана çапла çаврăнса тухрĕ. Тен, айăплă та пуль? Анчах та пирĕнтен кам йăнăшмасть?

Эпĕ çемьене тăрантарас ыйтăва хам çине илтĕм. Çав вăхăтра манăн та кăткăс тапхăрччĕ. Анчах та эпĕ ун çинчен шухăшламарăм, хамăн вăя шантăм. Эпĕ çакна пĕлсех тăтăм – йывăрлăхсене парăнмăпăр, кĕрешĕпĕр, хамран мĕн килнине йăлтах тăвăп – никама кўренмесĕр, никама шанмасăр... Позитив юхăмĕ палăртнине пурнăçлама пулăшрĕ. Эпĕ çав укçана ĕçлесе илтĕм.

Хам пурнăçа сăнаса çапла пĕтĕмлетме пултаратăп – телей тўперен ўкмест. Телей – скульптура пек. Ăна хамăрах калăплатпăр, кирлĕ форма йăвалатпăр. Çавăнпа пĕтĕмпех пирĕн ăсталăхран кăна килет.

**/Леди. майл.ру/.**

## КĂСĂКЛĂ

## Динозаврсен çăви

Китай çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче Жэхэ провинцийĕ пур. Археологсемпе палеонтологсемшĕн вăл – ылтăн кăлармалли вырăнпа танах.

Жэхэ таврашĕнчи кўлĕсенче тахçан авал пурăннă чĕрчунсемпе вĕçенкайăксен кĕлеткисен юлашкисем упранаççĕ. 120-130 миллион çул каялла çак тăрăхра тĕлĕнмелле пысăк катастрофа пулса иртнĕ. Инкекре кунти пур чĕрчун туххăмрах вилсе пĕтнĕ. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, вĕçенкайăксен те, пулăсен те, динозаврсен те кĕлеткисен чи пĕчĕк пайĕ таран упранса юлнă.

Çакăн пек упранма пахалăхлă мумификаци кăна пулăшать. Çакна, паллах, ятарласа никам та туман. Апла тăк, çутçанталăк хăй тăрăшнă.

Çакă та кăсăклă. Ытти чĕрчуна пырса тивекен инкек нумай чухне вĕçенкайăксемшĕн хăрушă мар. Анчах та ку тĕслĕхре – урăхларах ўкерчĕк: ара, вĕсем те чĕрĕ юлайман вĕт. Чĕрчунсен юлашкине тĕпченинчен çакă курăнать – вĕсен шăмми-шакки çинче хуçăлнă вырăн нумай. Ку вара чăтма çук шăрăхпа çыхăнма пултарнă.

Ăсчахсем палăртнă тăрăх, инкек, ахăртнех, вулкан сирпĕннипе çыхăннă. Сывлăш температури 200-300 градуса çитме пултарнине калаççĕ. Тўпене çавна май наркăмăшлă пĕлĕт çĕкленнĕ. Сывлама йывăрланнипе чĕрчунсем кўлĕ хĕррине васканă. Кунта вара вĕсене вулкан кĕлĕ хупласа хунă. Халĕ те ун ăшĕнчех упранаççĕ вĕсем – мумие çаврăннăскерсем.



## Шыв тĕпĕнчи хула

Heracleion хули çĕр питĕнчен 1500 çул каялла çухалнă. Ун çинчен Греци писателĕ Геродот Елена Троянская историйĕпе çыхăнтарса каласа кăтартнă.

Franck Goddio шыв археологĕ /Франци/ çухалнă çак хулана нумаях пулмасть шыраса тупнă темелле. Вăл, тĕрĕссипе, Наполеонăн çар карапĕсене шыранă-ха, анчах та Египет турамăшĕ Изида, Хапи Турă тата паллă мар фараон статуйисен тĕлне пырса тухнă. Вĕсемсĕр пуçне шыв тĕпĕнче Египет туррисен çĕр-çĕр пĕчĕк палăкĕ упраннă. Саркофагсенче çĕршывăн тĕп Туррине Амона кўнĕ парнесен – чĕрчунсен – мумифициленнĕ пайĕсене тупнă.

Вĕсене тата шыв тĕпĕнче чиперех упраннă тĕрлĕ амулета, тĕн япалисене тĕпчени авалхи тĕнче чаршавне тата кăштах сирсе пăхма май парĕ.

## Ылтăн йывăççем

Хула ачисем йывăç çинче темĕн ўснине те ĕненеççĕ: çăкăр та, укçа та... Тĕлĕнмелле те, Австрали ăсчахĕсем вĕсемпе килĕшеççĕ. Сăмах вĕççĕн кăна та мар – çакна вĕсем опытсем ирттерсех ĕнентерме пултарнă: вĕсен тăрăхĕнче ўсекен эвкалиптсен çулçисенче чăнласах ылтăн пур. Апла тăк, укçа чăнласах йывăç çинче ўсет!

Çак йывăççем, ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх, ылтăн кăларакан вырăнта ўсеççĕ мĕн. Пархатарлă çак метала эвкалиптсем тымар урлă ĕмсе илеççĕ пулĕ тесе шухăшлаççĕ. Шыв тата тутлăхлă ытти япала ытларах йывăç çулçинче упранать. Ылтăн та çапла майпах унта çитсе вырнаçнă ахăр. Çак пĕтĕмлетĕве тăвиччен ăсчахсем йывăççен тĕрлĕ пайне тĕпченĕ – туратти-сене, тунине, хуппине... Вĕсенче ылтăн, çулçăрипе танлаштарсан, самай сахалрах.

Анчах та вырăнти халăхăн çакăншăн савăнма сăлтав çук. Эвкалипт çулçи ылтăн пуррине кура пачах та йăлтăртатмасть, ытти йывăççăннинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть вăл, çавăн пекех – сип-симĕс.

**/Gazetavv.com, svit24.net, primeinfo.net.ru/.**

Кадрсен пайĕнче:
– Эсир малтанхи ĕçрен мĕншĕн кайрăр?
– Урăх ĕç шырама хушрĕç те...
* * *
Телефонпа калаçмалли йĕрке – малтан сӳнтер, комментарисем – кайран.
* * *
Вовочка пилĕк çул калаçман. Черетлĕ хут чей ĕçме ларсан хайхи кĕтмен сĕртен:
– Манăн куркана мĕншĕн сахăр яман? – тет.
– Ку таранччен мĕншĕн калаçман вара эсĕ? – савăнсах каяççĕ ашшĕпе амăшĕ.
– Ку таранччен сахăр яраттăрччĕ те...
* * *
Арăм – повар, савăт-сапа çăвакан, тирпейлӳçĕ, медсестра, психолог, воспитатель, учитель, çĕвĕç, экономист, бухгалтер, еркĕн... Упăшка вара, курăр-ха, ĕçре ывăнать!
* * *
Висĕ çулти хĕрĕмрен ирхине ыйтатăп:
– Мĕн çиетĕн-ха?
– Пирĕн çăкăр пур-и?
– Пур.
– Çу вара?
– Пур.
– Кăлпасси...
– Пур.
– Эпĕ икерчĕ çиетĕп...
* * *
Упăшки – арăмне:
– Эпĕ халĕ аванах ĕçлесе илетĕп, тепĕр хĕрарăма тăрантарма-тумлантармашкăн та çителĕклĕ укçа-тенкĕ. Мĕн шухăшлатăн çакăн пирки?
– Пит аван, – савăнсах каять хĕрарăм. – Халех анне патне шăнкăравлатăп, пирĕн пата пурăнма куçса килтĕр.
* * *
Сутуçăран вăлчаллă пулă ыйтсан:
– Манăн мĕн, ăна УЗИ тумаллаим? – тет.
* * *
Ача чухне лайăхчĕ. Аннене пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ ячĕпе мĕн те пулин ӳкерсе параттăм та – эх, савăнатчĕ! Мăшăр çакна хаклама пĕлмест.
* * *
4 кун диетăна пăхăнса пурăнтăм. Çĕрле чăтаймарăм, тăтăм та сивĕтмĕше уçрăм. Малалла мĕн пулнине ас тумастăп. Тăна кĕнĕ çĕре кăшман яшкине шăккалатпа сыпса çиеттĕм ĕнтĕ.
* * *
Травмпункт. Пĕр харăс 20 арçынна илсе пынă – пурнине те пуçĕсене çапса çурнă. Тухтăр нимĕн те ăнланмасть – мĕн пулса иртнĕ?
– Ав çав кукша пуçлă арçынна куратăр-и? – ăнлантарать шар курнисенчен пĕри. – Арăмĕ ăна çатмапа хăваланă, вăл вара çынсен хушшине кĕрсе тарса çухалмашкăн тĕв тунă...
* * *
Пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ. Ирхине тăратăп та ваннăй еннелле утатăп. Кухньăран упăшка сасси илтĕнет:
– Хăвăрт кăна каялла кĕрсе выртнă пултăр, – усал сăмахпа вăрçăнать хайхи. – Кĕçех кофе илсе пырăп!
* * *
"Ывăлăм, эсĕ ыйтнă пек 100 тенкĕ ярса паратăп. Анчах та манса ан кай – икĕ нульпе кăна çырăнать вăл, эсĕ вара виççĕ çавăрса хунă!"
* * *
Хĕрарăм тантăшне каласа кăтартать:
– Упăшкана ниепле те йĕркене вĕрентсе çитерейместĕп – енчĕке кашнинчех урăх вырăна пытарса хурать.
* * *
Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ.
– Кулсам, – тетĕп ывăлăма, – эпĕ сана сăн ӳкеретĕп.
– Эпĕ авăн уйăхĕнчен пуçласа çу вĕçленичченех кулмастăп, – хуравлать вăл.
* * *
Упăшка каллех ӳсĕр килчĕ. Питне автозагар йышши крем сĕрсе хутăм. Ирхине мăкăртатанçи турăм:
– Питне кур-ха, вырăн-вырăнăн йăлт саралса ларнă. Пĕверӳ пачах ĕçлеме пăрахать-и-ха?..
Пиллĕкмĕш уйăх ĕçмест.
* * *
Дворник ăнлантарса çырнинчен: "Эпĕ пачах та ӳсĕр пулман. Çава хусăлса кайрĕ те, çĕре выртса курăк çиме пуçларăм – плана епле пулсан та тултармалла тесе хăвăр каларăр вĕт!"
* * *
Хĕрĕме калаçакан пукане илсе патăм. "Апат çитер", "Выля манпа" йышши сăмахсем калаканнине. Çур сехетрен пепкем кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ: "Хăçан тăранатăн эсĕ!!!"
* * *
– Ваçça! Эсĕ иккĕмĕш сумка çухатрăн ĕнтĕ!
– Ну, эпĕ ĕçлетĕп вĕт-ха. Ĕçлемен çын кăна йăнăшмасть.
– Çапла пулĕ те, анчах та çакна манса ан кай: эсĕ – инкассатор!
* * *
Алăк шăнкăравĕ янăрать.
– Кам унта?
– Чӳрече лартакан.
– Эсир халĕ кăна кĕтĕр вĕт?
– Тухса ӳкрĕм.
* * *
Качча ашшĕ-амăшĕпе вăрçăнать:
– Йăлăхтарса çитертĕр эсир мана! Киле вăхăтра таврăнмалла, яланах сирĕн çумра пулмалла! Манăн вара ирĕклĕ пулас, хĕрсем патне каяс килет. Чарма ан та хăтланăр мана, эпĕ килтен тухса каятăп! – алăк патне çирĕппĕн утать хайхи.
Ашшĕ – ун хыççăн.
– Ан чарăр терĕм вĕт сире!
– Чарас шухăш та çук, – хуравлать ашшĕ. – Кун пек пурнăç мана та йăлăхтарчĕ, эпĕ те санпа пĕрле пыратăп.

### ☺И-ХИ-ХИК☺

## *Саламлатпăр*

*Елчĕк районĕнчи Кавалта пурăнакан <u>Алевтина Владимировна НОВИКОВĂНА</u> çуралнă кунпа чун-чĕререн саламлатпăр. Мĕн ĕмĕтленни яланах пурнăçланса пытăр, сăн-питӳнтен ăшă кулă ан кайтăр. Çемйĕрте тăнăçлăх, килĕшӳ, юрату хуçаланчăр, ырă ĕçсем тума Турă вăй-хал патăр. Кĕреке ырă çынсемпе тулли пултăр, телей курки тăкăнса тăтăр.*

*Çирĕп сывлăх та хастарлăх,*
*Ĕмĕр иксĕлми вăй-хал,*
*Çут телей те савăнăç, ырлăх,*
*Кăмăлтан сунатпăр халь.*
*<u>Ĕçтешĕсем, сывăх тăванĕсем.</u>*

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ


АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
**НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ**
Дома печати.
Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** – маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**
**38.Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.
**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**
**51.Бурение колодцев. Кольца колодезные замковые,** качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 89278477143, 89373790080.
**53.Изготовление ЛЕСТНИЦЫ** /дуб, хвоя, береза/. Т. 89176623494.
**77.Натяжные ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.
**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.
**690.Парапсихолог,** потомственный экстрасенс **Алина Фад,** дочь финалиста "Битвы Экстрасенсов" Алексея Фада. Помогу в трудной ситуации. Защита, амулеты, обереги. Тел. 89093002277.

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС,
**КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.
**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**
**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 89603016374.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.
**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.
**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**
**15.Кирпич** любой. Т. 89613393363.
**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 89033468556.
**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.
**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.
**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. ТЕПЛИЦЫ, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru
**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.
**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.
**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.
**594.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 14000 руб., 3х8 – 18000 руб. Т. 8-917-666-80-20.
**595.ТЕПЛИЦЫ** от производителя по низким ценам. Т. 48-16-54.
**728.Коз и козлов** Зааненской породы. Т. 8-961-342-90-59.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Тел. 8-962-599-47-06.
**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.
**694.Бычков, коров, тёлок, лошадей** – дорого. Т. 8-961-344-03-82.

### ĔÇ/РАБОТА

**665.Требуются КАМЕНЩИКИ в Москву.** Оплата своевременная. Т. 8-937-391-78-03.


# Сăмах каçмăш

**Н.Краснов Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Савăт-сапа. 2. Çил ...ĕ. 4. Хĕллехи тумтир. 5. Ута-улăм купи. 7. Айташ çырнă сăвăлла роман. 8. Литература жанрĕ.

АЯЛАЛЛА: 1. Çурхи вĕçенкайăк. 2. Утă-улăм вырăнĕ. 3. Пистолет. 4. Çĕлен-... . 5. Хăшĕ-пĕри ăна ют алăпа туртать. 6. Пушкин хайлавĕнчи граф.

ÇӲЛТЕН – АЯЛАЛЛА – СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Пионер герой та, тинĕсри чĕрчун та. 2. Чăваш çыравçи, «Сехмет» кĕнеке авторĕ. 4. Хăйă чĕлмелли хатĕр. 5. Дачăри кăмака.

ÇӲЛТЕН – АЯЛАЛЛА – СУЛАХАЯЛЛА: 2. Тахçан вăл пионерсен курорчĕ пулнă. 3. Çĕршыва тӳлемелли парăм. 5. Выртсан-выртсан мăклансах каять. 6. Нимсĕр ăна та пĕçерейменĕн.


**« ХЫПАР »**
**Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ**

4 627126 799869

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

**Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ**

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

**Çырăнмалли индекс: 11515**

**Редактор – М.М.ИЛЬИНА**

**Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА**

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 02.11.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 6967. Заказ 3924.